Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 30 ЫТЛАРИКУН 300(4812)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

19-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67; Ред. заместителĕн 0—88; Редакци секретарĕн 4—40; Дежурнăйăн 6—23

ССР Сойузĕ 15 çул тултарчĕ

Пирĕн халĕ пĕтĕмпех пулса çитнĕ тата пур йăвăрлăхсене те тӳссе иртернĕ нумай нацилĕ социалисăмлă государствă пур, унăн çирĕплĕхне çутçанталăкăн кирек хăш пайĕнчи кирек хăш нацилĕ государствă та хапсăнма пултарĕччĕ. *(Сталин)*

ССР Сойузĕ—хăватлă, нумай нацилĕ, социалисăмлă государствă

Пĕтĕм Сойузри Советсен 1-мĕш Сиесĕ пулни вунпилĕк çул тултарни

Вунпилĕк çул каяларах, 1922 çулти декабĕрĕн 30-мĕшĕнче, Пĕтĕм Сойузри Советсен 1-мĕш Сиесĕ Сталин йулташ доклачĕ тăрăх РСФСР, УССР, БССР тата ЗСФСР Советсен Сиесĕсем çак тăватă республика пĕр сойузлă государствăна пĕрлешесси çинчен йышăннă договора çирĕплетрĕ. Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне тăвасси çинчен йышăннă исторند декларацире каланă:

„Нумай пулмаст хăйсен совечĕсен сиесĕсене пухăнса „Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне" тăвасси çинчен йышăннă советлă республикăсенчи халăхсен ирĕкĕ çак сойуз пĕртан правалă халăхсен ирĕклĕ пĕрлешĕвĕ пулса тăнине, кашни республикăна сойузран ирĕклĕн тухма права панине, сойуза кĕме мĕн пур социалисăмла советлă республикăсене,—хаљ пуррисене те, малашне пулма пултарассисене те,—çул уçă пулнине, халăхсен мирлĕ пĕрлешĕвĕпе тăванла пĕрле ĕçлессин 1917 çулти октябĕрте хывнă тĕп никĕсне сойузлă çĕнĕ государствă тивĕçлипе тăрласа çитернине, çак сойузлă государствă тĕнчери капиталин ăма хирĕç шанчăклă тĕрек пулса тăрассине тата мĕн пур çĕршывсенчи ĕçсынисене пĕтĕм тĕнчери социалисăмлă советлă республикăна пĕтĕçтерес ĕçре тăтăклă утăм пулса тăрассине шанчăклăн çирĕплетсе парать.

Пĕтĕм тĕнче умĕнче çакăн çинчен пĕлтерсе, пире уполномочи парса йанă Советлă Социалисăмлă Республикăсен конституцийĕсенче хăйĕн тĕрекне туйнă совет влаçĕн никĕсĕ нихăçан никсĕлми пулса тăни çинчен чăплăн пĕлтерсе, епĕр, çав республикăсен делегачĕсем, пире панă полномочисем тăрăх, Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне тăвасси çинчен калакан договора алă пусма йышăнатпăр".

Ленинпа Сталин нумай нацилĕ советлă государствă тăвас мĕн пур аслă ĕçе хавхалантарса, йертсе пынă.

Ленинпа Сталин большевиксен партин наци ыйтăвĕнчи программин никĕсне Социалисăмла Аслă революци пулаччен нумай малтан туса панă. Ленинла-сталинла наци политикин принципĕсем çинче çирĕп тăрса, çак политикăна йĕркерен пурнăçа кĕртсе пырса, совет влаçĕ хăй ĕçлеме пуçланă малтанхи кунсенченех „уйрăм нацисемпе ăрусене пĕр пĕрлĕхлĕ пролетари государствине пĕрлешсе пĕрпĕрне шанас никĕс çинче, пĕр пĕрине тăванла, ирĕклĕн килĕшсе пурăнмала тăвас никĕс çинче" организацилес çула тытрĕ. (Сталин. „Совет влаçĕн Российăри наци ыйтăвĕпе пыракан политики").

Патша Российĕ чăн-чăн „халăх тĕрми" пулнă. Патша влаçĕн нацилĕ политики нацисем хушшинчи хирĕçӳсене чĕртес йĕрпе, халăхсене тискеррĕн пусарса чарусăрăн експлоатацилес йĕрпе пынă. Патша влаçĕ нацилĕ окраинăсем хуçалăхпа культурă тĕлĕшĕнчен çаплипех кайа йулса пымалла тесе çирĕплетнĕ. Вырăс мар наци ĕçсыннисем вырăс капиталисĕсемпе помещикĕсен тата „хăйсен" нациле буржуазин, емирсен, хансен, бексен, духовенствăн икĕ хутлă тискер пусмăрĕ айĕнче йынăшса тăнă.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци нацилĕ пусмăрлăхпа прававрлăхăн сăнчăрне çапса татрĕ. „Российăра совет стройĕ туса çирĕплетни тата нацисене хăйсен тĕллĕн государствă туса уйăрălma правасем пани—Российăри национальнăçсен ĕçсынийĕсем хушшинчи çыхăнăвĕсене тĕпрен улăштарчĕç, нацисем хушшинчи ĕлĕкхи хирĕçӳсен сăлтавсене пĕтерчĕç, нацилĕ пусмăрлăхăн никĕсне пĕтерчĕç, вырăс рабочийĕсене урăх нацилĕ тăванĕсем умĕнче Российăра çеç мар, Йевропăра та, Азире те шанчăка кĕларчĕç, çак шанчăк хавхалану патне, пĕр ĕçшĕн пĕрле тăрса кĕрешесси патне илсе çитерчĕç". (Сталин. „Партин нацилĕ мăтури черетлĕ задачисем çинчен").

ССР Сойузĕнчи халăхсен тăванла сойузĕ, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, мĕн пур национальнăç ĕçсынийĕсен Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци çĕнтерĕвĕшĕн, граждан вăрçи фрончĕсенче Российăри тата пĕтĕм тĕнчери буржуазин пĕрлешнĕ вăйĕсене çĕнтерессишĕн пынă пĕрлĕхлĕ кĕрешĕвĕнче, икĕ вăрçăпа ишĕлсе йулнă хуçалăха йусассишĕн, сталинла пйатилеткăсене пурнăçлассишĕн пынă паттăрла кĕрешĕвĕнче тĕрекленнĕ, малала ӳссе пынă. Революцин малтанхи тапхăрĕнче, РК(б) Партийĕн вуниккĕмĕш сиесĕ палăртнă пек,—ун чух национальнăçсен ĕç массийĕсем хăйсен ирĕклĕхне пуçласа туйса илнĕ, çав вăхăтрах йут çĕршыв интервенцийĕ куç кĕрет курăнмала хăрушлăх пулса тăрайман пулнă,—халăхсен пĕрле ĕçлесси çирĕп формăсене кĕрсе çитеймен-ха. Белоруççи, Украинă, Кавказ халăхĕсем аслă вырăс халăхĕпе, РСФСР-па—социалисăмла революцин крепăçĕпе тата тачăнрах çыхăнса ĕçлеме тургăнна,—мĕншĕн тесен çакăн пек çыхăнса ĕçленинчен контрреволюцин хĕçпăшаллă вăйĕсене çĕнтересси килнĕ. Чăн та çапла, белогвардейецсемпе, интервентсемпе, алла хĕçпăшал тытса кĕрешес задачă малти планра тăнă тапхăрта, нацилĕ советлă республикăсен пĕрле ĕçлесси вăрçă сойувĕн формипе пулса пынă. Советлă республикăсен аслă сойузĕ буржуазипе помещиксен хĕçпăшаллă вăйĕсене çĕмĕрсе парахрĕ, рабочисемпе хресченсене граждан вăрçин мĕн пур фрончĕсенче çĕнтерӳ туса пачĕ.

Вăрçă фрончĕсене пĕтерсе пынă май, мĕн пур национальнăçсен ĕçсынийĕсем умне малти вырăна хуçалăх строителствин задачĕсем, икĕ вăрçăн—империалисăм тата граждан вăрçисен йăвăр йулашкийĕсене—хуçалăх арканса кайнине пĕтерес задачсем тухса тăчĕç. Унчухнехи лару-тăру Советлă республикăсем умне вăрçă сойузĕ çумне тата хуçалăх сойузĕ хушас ыйту лартнă.

РСФСР, УССР, БССР тата ЗСФСР Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне пĕрлешни, РК(б) Партин 12-мĕш сиесĕ кăтартнă тăрăх пĕрлешсе ĕçлес формăсем ӳссе пынин пĕтĕçтерӳлĕ тапхăрĕ, куннинче, халăхсем нумай нацилĕ пĕрлĕхлĕ совет государствине вăрçăпа хуçалăх тата политикă ĕçĕсене туса пыма пĕрлешнĕ тапхăр пулса тăрать. („ВКП(б) в резолюциях и решениях съездов, конференций и пленумов ЦК ВКП(б)" 591 стр).

Пĕтĕм Российăри Советсен 10-мĕш, унтан Пĕтĕм Сойузри Советсен 1-мĕш сиесĕсен трибунисем çинчен Сталин йулташ хăйĕн историле доклачĕсенче, республикăсем хушшинчи çыхăнăва договорсем тăрăх туса пырас кивĕ формăсенчен сойузлă пĕр государствă тăвасси патне куçма кирлине гениле курса кăтартса панă.

Совет республикăсен пĕр сойузлă государствăна пĕрлешмелех пулни, Сталин йулташ кăтартса панă тăрăх, ак çакăнтан тухса тăнă: пĕрремĕшĕнчен, хуçалăх ишĕлнине пĕтерме советлă республикăсен вăйĕсене пĕрлештермеле пулнă, çĕршывăн економикине çĕклентерсе йама федерацири уйрăм районсемпе республикăсем хуçалăхра тĕрлĕ ĕçсем туса тăнине курмала пулнă. „Облаçсем çавăн пек тĕрлĕ ĕçсем туса тăнине,—тенĕ Сталин йулташ Пĕтĕм Российăри Советсен 10-мĕш сиесĕнче,—перопа пĕрре чĕрнипех хуратса тăкма çук: вăл федерацин хуçалăхлă аталанăвĕн пĕтĕм истори тăршшинче пулса тăнă. Çавăн пек чухне тĕрлĕ ĕçсем туса тăни, ăна пула республикăсем уйрăмăн пурăннă уйрăм районсем туллин аталанма пултараймаççĕ, республикăсене пĕрлешсе пĕрлĕхлĕ хуçалăх тума хушать".

Республикăсене пĕрлешес çул çине илсе пынă сăлтавсен тепĕр ушкăнĕ, Сталин йулташ кăтартса панă тăрăх, çакă пулнă: капиталисăмлă пĕтĕм тĕнче умĕнче—социалисăмлă республикăсен çарлă, дипломатилĕ тата економикăлă пĕрлешӳлĕ фронтне тумала пулнă. Партипе халăхăн çулпуçĕ çапла асăрхаттарнă: граждан вăрçине çĕнтерӳлĕ вĕçлерĕмĕр пулин те, пирĕн çĕршыв çине йутран тапăнас хăрушлăх пĕтмен, вăрçă хăрушлăхĕсĕр пуçне, советлă республикăсене економикăпа дипломати тĕлĕшĕпе уйăрса хурас хăрушлăх пулнă.

Йулашкинчен, совет влаçĕн характерĕнчен, унăн класлă никĕсĕнчен хăйĕнчен пĕрлешме кирли тухса тăнă. „Совет влаçне çакăн пек тунă,—тенĕ Сталин йулташ,—вăл, хăйĕн шалти йĕркипе интернационалласкер, массăсенче пĕрлешес идейăна пур майпа аталантарать, хăй вĕсене пĕрлешес çул çине илсе пырать".

ССР Сойузĕнчи Советсен 1-мĕш Сиесĕ „декларации пройекчĕпе" „Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне туни çинчен договора" çирĕплетнĕ. Çав сиес решенийĕсен пĕтĕм тĕнчипе историлĕ пахалăхне палăртса, Сталин йулташ çапла каланă:

„Пайанхи кун çĕнĕ Российăн, нацилĕ пусмăрлу сăнчăрĕсене çапса çĕмĕрнĕ, капитала çĕнтерессине организацилене, пролетариат диктатурипе тунă, хĕвел тухаçĕнчи халăхсене вăратнă, хĕвеланăçĕнчи рабочисене хавхалантаракан, парти йалавĕ пулнă хĕрлĕ йалава государствă йалавĕ туса хунă тата çав йалав тавра советлă республикăсенчи халăхсене, вĕсене пĕр государствăна, пĕтĕм тĕнчери пулас Советлă Социалисăмлă Республикăн тĕслĕхĕ пулса тăракан Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне пĕрлештерме пĕтĕçтернĕ çĕнĕ Российăн чаплă та çĕнтерӳлĕ уйавĕ пулса тăрать". (Пĕтĕм Сойузри Советсен 1-мĕш сиесĕнче „Советлă Республикăсем пĕрлешни çинчен" тунă доклад).

1923 çулхи ийулĕн 6-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ ССР Сойузĕн Конституцине йышăннă. Çав Конституцин никĕсне Пĕтĕм Сойузри Советсен пĕрремĕш сиесĕ йышăннă „декларацие" ССР Сойузне туни çинчен йышăннă договора хунă. Ку Конституцийе 1924 çулти йанварĕн 31-мĕшĕнче Пĕтĕм Сойузри Советсен иккĕмĕш сиесĕ тăтăклăн çирĕплетнĕ. 1925 çулта ССР Сойузĕн составне Узбек СС Республикипе Туркмен ССРеспубликĕ, 1925 çулта Таджик СС Республикĕ кĕнĕ.

* * *

Пĕтĕм Сойузри Советсен 1-мĕш сиесĕ пулнăранпа вунпилĕк çул иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче ССР Сойузĕнчи халăхсем социалисăмла обществă тăвассишĕн çине тăрса кĕрешсе, ĕçлесе пычĕç. ССР Сойузĕнчи ĕçсынисем, ăсларан та ăслă, аслă Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, троцкисла-бухаринла предателсене, буржуалă националиссене хирĕç, халăхăн ытти тăшманĕсене те хирĕç хаяррăн кĕрешсе пырса, социалисăм туса хучĕç, ĕлĕк мĕскĕн, вăйсăр пулнă çĕршыва хăватлă, пуйан, чечекленсе пыракан социалисăмла державă туса хучĕç. Пирĕн социалисăмла çĕршывра ĕнтĕ çынна çын експлоатацилени çук, пĕр халăхсем пуçпулса тăни тата тĕприсем пусмăрта пурăнни те çук.

Сталинла пйатилеткăсене çĕнтерӳлĕн пурнăçа кĕртнинĕ пула çĕршыва индустриализацилени тата йалта колхоз стройĕ çĕнтернине пула совет çĕршывĕ хуçалăхпа културăн пур облаçĕсенче те хăватлăн чечекленсе ӳссе пырать.

Пĕтĕм совет çĕршывĕн халăх хуçалăхĕ тăвăллă хăвăртлăхпа çĕкленсе пынă вăхăтра, нацилĕ окраинăсен промышленнăçĕпе йалхуçалăхĕ тата култури уйрăмах хăвăрт ӳссе пырать. Нацилĕ республикăсем ĕлĕк калама çук кайа йулнă пулнă. Ленинла-сталинла наци политики вĕсене пысăк хăвăртлăхпа индустриализацилессине пурнăçа кĕртрĕ, вĕсен хуçалăхĕпе културине улăпла ӳстерсе çĕклентерчĕ. Ленин—Сталин партин тĕрĕс политикине пула ĕлĕкхи вăхăтра вырăс халăхĕнчен йутшăнни, ăна шанманни пĕтрĕ. Украинцăсем, казахсем, грузинсем, киргизсем, ССР Сойузĕнчи ытти пур халăхсем те аслă вырăс халăхĕпе тăванлă пĕтĕçсе пурăнаççĕ; аслă вырăс халăхĕ, пĕртан халăхсен тăванлă çемйинче пулса, ĕлĕк кайа йулнă национальнăçсене пулăшса, çĕнĕ пурнăç тума пулăшса пычĕ.

ССР Сойузĕнчи наци строителствин итогĕсене Сталин йулташ ССР Сойузĕнчи Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сиесĕнче ССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен тунă докладра уçăн çутатса панă:

„Çавна пула пирĕн халĕ пĕтĕмпех пулса çитнĕ тата пур йăвăрлăхсене те тӳссе иртернĕ нумай нацилĕ социалисăмлă государствă пур, унăн çирĕплĕхне çутçанталăкăн кирек хăш пайĕнчи кирек хăш нацилĕ государствă та хапсăнма пултарĕччĕ".

Пирĕн социалисăмла государствăра халĕ вунпĕр сойузлă республикă пĕрлешсе тăраççĕ,—Сталинла Конституци çак нумай нацилĕ государствă тытанса тăракан принципсене аталантарса çирĕплетрĕ. ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавĕ ССР Сойузĕнчи халăхсем никам уйăраймин çирĕп тăванлăхпа пĕтĕçсе тăнине, вĕсем большевиксен партийĕпе унăн çулпуçĕшĕн—Сталин йулташшăн пĕтĕм чĕререн тăнине кăтартса пачĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавĕнче мĕн пур наци ĕçсынийĕсен политикăла активлăхĕ пысăккăн ӳсни, пĕтĕм совет халăхĕсем моральлĕ тата политикăлă пĕрлĕхлĕ пулса тăни питĕ лайăх палăрчĕ. Пĕтĕм суйлавçăсенчен 98,6 проценчĕ Сойуз Совечне суйлама, 97,8 проценчĕ Национальнăçсен Совечне суйлама хăйсен сассисене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пачĕç. Тĕнчери пĕр правителства та совет правителстви пек хăйĕн политикине çакăн пек пĕр кăмалпа ырланине курман, çавăн чухлĕ суйлавçăсем çине тайанса тăман.

Нумай нацилĕ совет государстви тĕрекленсе тата пуйанланса пыни пĕтĕм тĕнчери буржуазине тулăштарать. Фашисла агрессорсем ССР Сойузне хирĕç тунă сăтăрла ĕçĕсенче буржуалă националиссемпе троцкисла-бухаринла бандитсем çине тайаннă. Ирсĕррĕн икĕпитленсе, предател маскипе витĕнсе, çав, фашиссен разведкисен ирсĕр агенчĕсем, хăйсен шпионла, сăтăрла тата террорисла ĕçĕсемпе ССР Сойузĕнчен Украинăна, Белоруççине, Узбекистана тата ытти нацилĕ республикăсене уйăрасшăн, çав республикăсене лучĕркесе çĕмĕрме йутçĕршыв захватчикĕсене парасшăн, ССР Сойузĕнчи халăхсен телейлĕ пурнăçне туртса илсе, вĕсене буржуалă помещикла експлоатаци пăйавĕпе тепĕр хут пăвасшăн пулнă. Вăл нихăçан та пулмĕ! Пирĕн çирĕп сталинец Н. И. Йежов йертсе пыракан çивĕч совет разведки, халăхсен чи усал тăшманĕсен чи тискер преступленийĕсене уçса пачĕ, шпионсен, сăтăрçăсен йăвисене тимĕр алăпа çапса аркатрĕ. Халăхсен мĕлйунла массисем пулăшни çине тайанса, чаплă наркомвнудельцăсем буржуалă-националисла тата троцкисла-бухаринла фашиссен йыттисене нимĕн йулмиччĕнех пĕтерсе пыраççĕ. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе гатах та çĕнĕ, чаплă çĕнтерӳсем патне пыракан нумай нациле совет государствин хăватне хавшатма пултаракан вăй çук!

Совет Сойузĕнчи халăхсем Ленинла—Сталинла наци политикин результачĕсене хăйсен куçĕсемпе курса тăраççĕ. Социалисăм çĕнтерĕвĕсен тата халăхсен туслăхĕн чаплă организаторне—аслă Сталина мĕн пур наци ĕçсынийĕсем пĕтĕм чĕререн тав тăваççĕ, ăна вĕçе-хĕрсĕр йуратаççĕ.

Ленин—Сталин йалавĕпе ССР Сойузĕнчи халăхсен тăванлăхĕ тата туслăхĕ малашне те тĕреклене пырать, совет çĕршывĕн пуйанлăхĕ нумайланса пырать, вăл пĕтĕм тĕнчери ĕçсынисене пусмăрлăхран, чухăнлăхран тата правасăрлăхран ирĕке тухмалли çула, коммунисăм патне пымалли çула çутатса тăрать.

„Мускаври тата Мускав облаçĕнчи фабрик-заводсенчи стахановецсем чĕнсе калани" пирки

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени

ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăнать:

1. Çакна ăнлантарса парас: ПСК(б)П Мускав комитечĕпе Мускаври тата Мускав облаçĕнчи стахановецсен декабĕрти канашлăвĕ пуçарнипе 1938 çулти йанварте туса иртерме хатĕрленекен „стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ" пĕтĕм ССР Сойузне мар, Мускав облаçне çеç тивет.

2. Тума шутланă стахановла уйăхлăха „стахановла рекордсен сталинла уйăхлăхĕ" тесе йат панине тĕрĕс тесе шутлама çук, мĕншĕн тесен стахановла йухăмăн пур ерисемпе уйăхлăхĕсем те стахановла йухăмăн чи пĕчĕк пайне çеç çавăрса илекен рекордменсене çеç мар, пур стахановецсене те тивмелле, ерно йе уйăхлăх вăхăтĕнче стахановецсен ретне сарасси чи кирлĕ задачĕсенчен пĕри тесе шутламала, çакна пăшăрханмала пулин те, ПСК(б)П Мускав Комитечĕ тата Мускаврипе Мускав облаçĕнчи стахановецсен канашлăвĕ чĕнсе каланинче сиктерсе хăварнă.

3. Стахановла уйăхлăх вăхăтне йанвар уйăхне суйласа илнине вырăнлă тесе шутлама çук, мĕншĕн тесен йанвар уйăхĕ промышленнăçпа транспортăн чылай чи кирлĕ отраслисемшĕн сезонлă характерлă уйрăм йăвăрлăхлă вăхăт пулать, кунтан та ытларах, йанварĕн пĕрремĕшĕнчен йулнă пит те кĕске срук, уйăхлăха кирлĕ таран хатĕрленме май памаст.

4. ПСК(б)П Мускав Комитечĕ стахановла уйăхлăха ПСК(б)П Тĕпкомĕ ирĕк памасăрах, тивĕçлĕ наркоматсемпе килĕшсе таталмасăрах иртерме тытăнни пирки, ПСК(б)П Тĕпкомĕ пур обкомсене, крайкомсене, нацкомпартисен Тĕпкомĕсене çакнашкал ĕçсене тунă чухне ПСК(б)П Тĕпкомĕнчен килĕшӳ ыйтма кирлине кăтартать.

5. ПСК(б)П Мускав Комитетне Мускав тата Мускав облаçĕнчи стахановла йухăмăн уйăхлăхне март уйăхне куçарма сĕнес.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ.

1937 çул, декабĕрĕн 28-мĕшĕ.

Паллă дойаркă рекорчĕсем

Сталин йачĕпе тăракан колхозăн (Шгеповск районĕ, Харьков облаçĕ) паллă дойаркки—Оксана Павловна Шчербина кăçал ăратлă ĕнерен талăкра сĕт суса илессипе нихăçан курман рекорд тунă. Унăн „Вита" йатлă рекордиски пĕр талăкра 69,5 литр сĕт панă „Лента" йатлă ĕнерен Шчербина йулташ 300 кун хушшинче 12623 литр сĕт суса илнĕ. Вăл ĕне талăкра 64—65 литăр сĕт парать.

(ТАСС).

Тбилисири Руставели кунĕсем

Совет Сойузĕн пĕтĕм халăхĕсем Грузин генилĕ поечĕ — Шота Руставелин „Витязь в тигровой шкуре" вилĕмсĕр поемин 750 çул тултарнине уйавлаççĕ.

Тбилисирен пĕлтернĕ тăрăх: ССР Сойузĕнчи Совет писателĕсен сойузĕн Руставели йубилейĕн пленумĕнче пулнисем декабĕрĕн 28-мĕшĕнче Грузин авалхи столицине—Мцхет хулине кайса курнă. Вĕсем Шота Руставели йачĕпе çыхăннă вырăнсене, çавнашкалах тата Грузи архитектурин авалхи памйатникĕсене кайса курнă.

Декабĕрĕн 28-мĕшĕнче каçхине Пленумăн черетлĕ ларувĕнче „Грузи Совет литератури йулашки пилĕк çул хушшинче" доклада итлене.

Пленум Шота Руставелин „Витязь в тигровой шкуре" поемине ССР Сойузĕнчи халăхсен чĕлхипе массăлă кăларма кирлĕ тесе шутласа, совет писателĕсен сойузĕн правленине вăл йышăнува практикăлă пурнăçа кĕртме хушнă. Сойузлă республикăсен Сутĕç Халăх Комиссариачĕсем умне вăтам шкулсенчи аслă класен вĕренӳ программисем çине Руставелин вилĕмсĕр поемине вĕренессине кĕртме ыйту лартма йышăннă.

Декабĕрĕн 30-мĕшĕнче Шота Руставели йачĕпе Тбилиси хула совечĕн чаплă пленумĕ пулать.

(ТАСС).

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕн Государства Гербĕ.

Российă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Государства Гербĕ.

Украинă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Государства Гербĕ.

Белорус Советлă Социалисăмлă Республикĕн Государства Гербĕ.

Грузин Советлă Социалисăмлă Республикĕн Государства Гербĕ.



Азербайджан Советлă Социалисăмлă Республикĕн Государства Гербĕ.

Советлă Социалисăмлă Республиксен Сойузĕ

Российă Советлă Социалисăмлă Федеративлă Республикĕ

РСФСР—çĕр талкăшĕ тĕлĕшпе, халăх хисепĕпе пирĕн Сойузри сойузлă 11 республикă хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. РСФСР çине Сойузри пĕтĕм çĕр талкăшĕн пилĕк пайĕнчен тăваттă пайĕ, пĕтĕм халăх йышĕн висĕ пайĕнчен икĕ пайĕ тивет.

РСФСР Сойузăн пĕтĕм çурçĕр тата вăтаçĕр тăрăхне, ССРС хĕвеланăç чиккинчен Лăпкă океана çити йышăнса тăрать. РСФСР-не Украинăпа Белоруçси йышăнса тăракан кăнтăр-хĕвеланăççĕр пуçне ССР Сойузĕн пĕтĕм Йевропăри пайĕ тата Кавказăн çурçĕр пайĕ, пĕтĕм Хĕвеланăç Çĕпĕр, Хĕвелтухăç Çĕпĕр, Инçет-Хĕвелтухăç кĕреççĕ.

РСФСР Кăнтăр чикки Крым сырăнĕсемпе Çурçĕр Кавказăн Азов-Хуратинĕс çыранĕсем пулса тăраççĕ. Хĕвелтухăçĕнче вара, Çĕпĕр çĕршывĕ тăрăх, РСФС Республикин кăнтăр чиккисем ССР Сойузĕн кăнтăр чиккисемпе пĕрех килсе тухаççĕ.

Çĕршыв пысăк пулнă май РСФСР çутçанталăк условийĕсем тĕрлĕрен пулнипе кăна мар, çĕр айĕнчи пурлăхсем нумай пулнипе те уйрăм вырăнта тăрать. РСФСР-ăн Уралта, Крымра (Керч), Çĕпĕрте тимĕр рудилĕ пысăк вырăнсем пур; Кузбасра, Хĕвелтухăç Çĕпĕрте, Уралта, Мускав патĕнче кăмрăк кăларакан пысăк вырăнсем пур; Азовпа Хуратинĕс йенче, Уралта, Башкирире нефтă вырăнĕсем пур; ылттăн, платинă, пăхăр, цинк, тăхлан руди вырăнĕсем пур.

РСФСР—ССР Сойузĕн хуçалăхлă чи пысăк никĕсĕ; вăл Совет Сойуз промышленнăçĕн тата йалхуçалăхĕн мĕн пур продукцийĕн 70 процентне парса тăрать.

ССР Сойузĕнче вырăс халăхĕ пĕтĕм халăх хисепĕнчен çурри ытларах, РСФС Республикинче—пĕтĕм халăхăн пилĕк пайĕнчен тăваттăшĕ вырăссем. Апла пулин те РСФС Республики нумай нацилĕ государствă пулса тăрать, РСФС Республикине автономлă республикăсем 17, автономлă облаçсем 6 кĕреççĕ. Çавăнпа та РСФСР сойузлă ытти республикăсем пек мар—федеративлă республикă пулса тăрать.

РСФСР Крымран пуçласа Камчаткăна çити тăсăлса çутçанталăк тĕлĕшпе те, хуçалăх тĕлĕшпе те сав тери тĕрлĕрен пулнă май, РСФС Республикине пайăн-пайăн пăхса тухмала.

Хуратăпралă мар Центр (Мускав, Рйазаҫ Тула, Иваново, Йарослављ облаçĕсем)—Российă государствин историлĕ вырăнĕ—РСФС Республикин анчах мар, пĕтĕм ССР Сойузĕн промышленнăç тĕлĕшпе чи аталаннăрах пайĕ пулса тăрать. Унта ССР Сойузĕн промышленнăçĕн 30 процентне йахăн, РСФС Республики промышленнăçĕн 40 процентне йахăн пухăнса тăнă. Тĕп отраçлĕсем—машинсемпе метал йапаласем тăвакан тата пир-авăрпа хими отраçлисем.

Промышленнăçлă ытти центрсенчен паллăраххисем—Иваново, Йарослављ, Орехово-Зуйево, Тула. Пур йенчен те тĕрлĕрен чĕр таварпа продовољстви илсе тăрса, Хуратăпралă мар Центр ытти облаçсемпе республикăсене тĕрлĕрен машинсем, оборудованисем, химикалисем, пиравăрсем, çавăн пекех тата кĕнекесемпе полиграфи промышленнăçĕн ытти продукцийĕсем парса тăрать.

Хуратăпралă Центр (Курск, Орйол, Тамбов, Воронеж облаçĕсем) тухăçлă çĕрлĕ тата çемçе климатлă. Патша вăхăтĕнче çак район тăтăшах „çука йулса пынă", крепостниксем кунта пуринчен те ытларах пусмăрланă, черносотенцăлă помещиксем пур çĕртинчен те ытларах пулнă, хресченсем пур çĕртинчен те ытларах йухăнса чухăна йулнă.

Халĕ ĕнтĕ Хуратăпралă Центр—вăйлăн аталаннă йалхуçалăхлă район пулса тăчĕ.

Кунтан ытти облаçсене тырă, сахăр, сÿс, çĕрулми, кантăр çăвĕ, хĕвелçаврăнĕш çăвĕ, сысна какайĕ, çавăн пекех тата металпа металтан тунă йапаласем, синтетически каучук кайса тăрать.

Çурçĕр (Ленинград, Архангељск, Вологда облаçĕсемпе Карел тата Коми автономлă советлă социалисăмлă республикисем кĕреççĕ)—ССР Сойузĕн Йевропăри пайĕн виççĕмĕш пайне йышăнса тăрать. Кăнтăр-хĕвеланăç пайне илмесен, Çурçĕр експорт ваљљи вăрман нумай хатĕрлет. Кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче, Ленинград—Вологдăран кăнтăр йенерех, тахçан авалах йĕтĕн тăвас, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç йăсталанса пынă вырăн.

Промышленнăçлă центрсенчен пысăк порт, промышленнăçлă тата кулјтурăлă пысăк центр пулса тăракан, кадрсем хатĕрлекен тата çĕнĕ те йăвăр производствăсене вăйлатакан Ленинград йăраснах паллă вырăнта тăрать.

Промышленнăçлă ытти центрсенчен паллăрахисем—Çурçĕрти Двина тинĕсе тухнă çĕрте ларакан Архангељск тата Кировск çĕнĕ хулисем. Кировск—социалисăмла хула, вăл Полјар унки лешйенче, аппатитсем кăларас тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчере паллă вырăтнта тăрать.

Çурçĕрти облаçсем ССР Сойузĕн ытти облаçĕсене тĕрлĕрен машинсемпе оборудованисем, кĕнекесем тата полиграфи промышленнăçĕн ытти продукцийĕсем, аппатитсем, аљумини, вăрман, йĕтĕн, сĕт-çу продуктисем, пулă парса тăраççĕ.

Хĕвеланăçĕ—Смоленск тата Калинин облаçĕсем. Унта çемçе те нÿрлĕрех климăт, хаклă вăрмансем, пысăк торф запасĕсем. Унта йалхуçалăхĕ техникăлă кулјтурăсем тăвас (йĕтĕн, кантăр, çĕрулми) тата продуктивлă выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес (ĕне выљăхпа сыснасем) ĕçпе специализациленнĕ. Хĕвеланăçĕнче, Калининпа Смоленск патĕнче, чылай пысăк промышленнăçлă центрсем ÿссе кайнă. ССР Сойузĕн ытти крайĕсене кунтан йĕтĕн, сÿс, сысна какайĕ, ытти аш-какай, сĕт çу продуктисем, вăрман, спичкă, пир-авăр кайса тăрать.

Атăл тăрăхĕ. Унта вырăссен аслă йухан шывĕ Атăл, Горькинчен пуçласа Аçтăрхана çити тăсăлса выртать. Атăл тăрăх анатала—вăрман, тăвала—нефтă, тырă, тăвар, пулă нумай турттараççĕ. Атăл çинче, унăн урлă чукунçулсем каçса иртнĕ çĕрте Атăл тăрăхĕнчи чи пысăк хуласем вырнаçнă.

Атăл тăрăхне Çурçĕртен кăнтăрала висĕ пайа: Варманлă Атăл тăрăхĕ, Вăрман çеçен хирлĕ Атăл тăрăхĕ тата Çеçен хирлĕ Атăл тăрăхĕ çине уйăрма пулать.

Вăрманла Атăл тăрăхне Горький тата Киров облаçĕсем, Удмурт тата Мари автономлă республикисем кĕреççĕ. Вăл центр Урала, унтан Çĕпĕре кайакан çулсем çинче выртать.

Вăрманлă Атăл тăрăхĕн промышленнăçлă чи пысăк центрĕ—Горький хули. Вăл Невапа Атăл тăрăх Ленинградран Каçпий тинĕсне, Окапа Камă тăрăх Мускавран Урала каймали шывçулĕсен йÿппинче вырнаçнăскер, сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче ÿссе, транспорт ваљљи машинăсем тăвакан пысăк вырăн пулса тăчĕ. Пароходсемпе паровозсем туса тăракан „Хĕрлĕ Сормово" çумне Йевропăри чи пысăк завод, Молотов йачĕпе тăракан автомобиљ завочĕ хушăнчĕ. Метал промышленнăçĕпе тата машинсем тăвакан промышленнăçпа пĕрлех, кунта вăрман ĕçлекен тата химии промышленнăçĕсем те аталанса карĕç.

Вăрманлă Атăл тăрăхĕ пĕтĕм Сойуз хуçалăхне паровозсем, пароходсем, автомобилсем парса тăнисĕр пуçне, станоксем, çĕре çемçетмели химилĕ имçамсем, вăрман, йалхуçалăх продуктисенчен—йĕтĕн тата сĕт-çу продуктисем те парса тăрать.

Вăрман-çеçен хирлĕ Атăл тăрăхне Куйбышев облаçĕпе Тутар, Чăваш, Мордва автономлă республикисем кĕреççĕ—ку вăрман пĕтсе çеçен хире куçакан вырăн пулса тăрать. Унта тулă тата ытти тырпулсен, çавăн пекех кантăр, çĕрулми, хĕвелçаврăнăшĕ акакан анлă уй-хирсем пур. Çĕрайĕнчи усăлă йапаласенчен унта сланцăсем, торф, нумай пулмасть Сызраҫ патĕнче тупнă нефтă вырăнĕ тата сурт-йĕр тумали тĕрлĕрен материалсем пур.

Вăрман çеçен-хирлĕ Атăл тăрăхĕн промышленнăçлă тĕп центрĕсем—Атăла Камă йухса тухнă вырăнтан инçетре мар ларакан, Атăл çинчи Хусан, тата Атăл йухса пырса тăвакан Самар Лукиҫ хĕвелтухăç хĕрринче ларакан Куйбышев хули. Вăрман-çеçен хирлĕ Атăл тăрăхĕн промышленнăçĕн тĕп отраçлисем: апат-çимĕç, вăрман ĕçлекен, стройматериалсем тата транспорт ваљљи машинсем тăвакан отраçлĕсем пулса тăраççĕ.

Вăрман-çеçен хирлĕ Атăл тăрăхĕ ытти облаçсене тырă, выљăх-чĕрлĕх, сÿс, йуман клепки, çурт-йĕр тумали материалсем парса тăрать.

Çеçен хирлĕ Атăл тăрăхĕ. Унта Саратов, Сталинград облаçĕсем, Атăл çинчи Нимĕç тата Калмык автономлă республикисем кĕреççĕ. Типĕ çанталăклă, Каçпий тинĕсĕ патĕнче, кăнтăр-хĕвелтухăçĕнче çурма-пушăхир пулса кайакан çеçен хирлĕ вырăн пулса тăрать. Унта ана-çарансен ытларах пайĕ—кĕтÿ çÿремели вырăнсем пулаççĕ. Саратовпа Сталинград хушшинчи аслă уй-хирсенче хаклă йышши хытă тулă, хĕвелçаврăнăшĕ, тата арбуз пахчисем йышăнса тăраççĕ. Атăл пырĕ тата ун çумĕнчи Каçпий тинĕс хĕррисем пулă тĕлĕшĕнчен питĕ пуйан. Атăлăн сулахай йенче тăвар запасĕсем—вĕçĕмсĕр пысăк тăвар кÿллисем нумай.

Çеçен хирлĕ Атăл тăрăхĕн промышленнăçĕн тĕп центрĕ Сталинград. Вăл Атăл Дон тата Донбас йенне пăранса кĕнĕ çĕрте ларать. Унта пысăк трактор завочĕ тата промышленнăçăн ытти шултра предприйатийĕсем пур. Аçтăрхан, Атăл пырĕнче ларать, вăл пулă тытас ĕçĕн, пулă тата карап-кимĕ тăвакан промышленнăçсен центрĕ.

Çеçен хирлĕ Атăл тăрăхĕнчен ытти облаçсене тырпул, арбузпа дынҙă, вылăх-чĕрлĕх, тĕрлĕрен консервăсем, çавăн пекех тата тракторсем, цемент, пулă, тăвар кайса тăрать.

Кăнтăр. Унта Дон-çи Ростов облаçĕ, Краснодарпа Орджоникидзе крайĕсем, Крым, Кабардино-Балкар, Çурçĕр-Осети, Чечен Ингуш тата Дагестан автономлă республикисем кĕреççĕ, хамăрăн кăнтăрти тинĕссем патĕнче ăшă çанталăклă вырăнта вырнаçса тăраççĕ.

Кăнтăр, пĕр йенчен çĕрайĕнчи пуйанлăхсем нумайĕнпе (Донбасăн хĕвелтухăç хĕрри, Керчри тимĕр руди, Грознай, Кубаҫ, Хуратинĕс нефти, Новороссийск çывăхĕнчи цемент тăмĕсем), тепĕр йенчен, кăнтăрти кулјтурăсем ÿсекен йалхуçалăхне тата курорт ĕçĕпе турисăма вăйлăн аталантарса йанă ăшă çанталăкĕпе чаплă.

Кăнтăр ытти облаçсене йалхуçалăх машинĕсем, нефтă, цемент, тырпул, табак, çырла çимĕç, тĕрлĕ çусем, çăм парса тăрать.

Урал. Унта Свердловск, Чељабинск, Оренбург облаçĕсем тата Башкир автономлă республики кĕрет. Урал—çĕрайĕнчи пурлăхсем тĕрлĕрен те нумайĕнпе тата центрпа Çĕпĕр çулĕ çинче выртнипе ÿснĕ. Уралти тимĕре Кузнецкри кăмрăкпа пĕрлештерекен Уралпа Кузнецк комбиначĕ. Сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче кунта Магнитогорскра металлурги завочĕ, Чељабинскра трактор завочĕ, Свердловскра машинсен завочĕ, Новый Тагилјра вагонсем тăвакан завод туса лартнă. Çаксем вĕсем Урала йăвăр промышленнăçăн малта пыракан вăйлă районĕ туса хучĕç.

Металсем тупса ĕçленисĕр пуçне Уралта вăрман, хут, химии промышленнăçĕсем те вăйлăн аталанса карĕç.

Уралăн промышленнăçлă тĕп центрĕсем—Свердловск, Чељабинск, Магнитогорск, Перм, Нижний Тагиљ, Уфа, Златоуст ытти облаçсене илсе тухакан тĕп таварсем—хура тата тĕслĕ металсем, тракторсем, сăрт-ту завочĕсен оборудованийĕ, вагонсем, çавăн пекех тата вăрман, хут, çĕре çемçетмели химилĕ имçамсем.

Хĕвеланăç Çĕпĕр. Унта Омск, Новосибирск облаçĕсем тата Алтай крайĕ кĕреççĕ. Кăнтăр йенчекăмрăк запасĕсем тĕлĕшпе ССР Сойузĕнче пĕрремĕш вырăнта тăракан Кузнецк бассейнĕ. Çеçен хирлĕ Алтайра тырпул лайăх пулать, Барабинпа Ишим вăрмансем, çеçен хирсем. Çурçĕр йенче—вăрман, пăлан, пула вырăнĕсем, тайгапа тундра. Çак территорин Кăнтăр пайĕнче хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнеле Çĕпĕр магистралĕ пырать; çурçĕреле, Пăрлă океан йенеле—Обь тата Иртыш шывĕсем йухса выртаççĕ.

Кăмрăк запасĕсемпе пĕтĕм тĕнчере пысăк вырăн йышăнса тăракан Кузбас парти ирĕкĕпе иккĕмĕш Донбас пулса тăчĕ. Кузнецк кăмрăкĕ Урал металургине тата пĕтĕм промышленнăçа чĕртсе йачĕ.

Кузнецкри металлурги завочĕ халљ ĕнтĕ мĕлйун тоннăран ытла метал кăларса тăраканскер, Çĕпĕрĕн тата Инçет-Хĕвелтухăçĕн „тимĕрç лаççийĕ" пулса тăчĕ.

Кăмрăкпа металсăр пуçне, Хĕвеланăç Çĕпĕртен тырă, выљăх-чĕрлĕх, çу тата вăрман та нумай кайса тăрать.

Хĕвелтухăç Çĕпĕр. Унта Красноярск крайĕ, Иркутск тата Чита облаçĕсем, Бурйат-Монголипе Йакут автономлă республикисем кĕреççĕ. Вăл Йенисейран пуçласа ăна Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи тинĕс хĕрринчен уйăрса тăракан сăрт-тÿрĕçсене çити аслă çĕршыв тăрăх сарăлса выртать.

Хĕвелтухăç Çĕпĕр çулĕ те сăртлă вырăнта вырнаçса тăрать. Çанталăк кунта Хĕвеланăç Çĕпĕртинчен те хайартарах. Кунти çанталăк çĕрĕç ваљљи Хĕвеланăç Çĕпĕртинчен начартарах, çавăнпа унта халăх та Хĕвеланăç Çĕпĕртинчен чылай сайрарах пурăнать. Анчах промышленнăç тĕлĕшпе аталанма кирли унта Хĕвеланăç Çĕпĕртинчен ытларах.

Кунта пирĕн пысăк шывсем: Йенисей, Ангара, Лена; çĕркăмрăк вырăнĕсем: Черемхово, Канск, Йенисей, Тунгусскă; пысăк та паха вăрмансем; ылттăн, тăхлан, молибден, волјфрам, ванадий т. ыт. çавăн йевĕрлĕ хаклă та сайра тĕл пулакан металсем.

Инçет-Хĕвелтухăçĕ Лăпкă океан тăрăх Владивостокран пуçласа Беринг тинĕс пырне çити тăсăлать, вăл тÿрех империалисăмлă Йапонипе чикĕленсе тăрать.

Ку край питех те çамрăк, халăх питĕ сайра пурăнакан çĕршыв. Унта тĕрлĕрен пуйанлăхсем—Сахалин çинче тата ытти çĕрте кăмрăкпа нефтă, тимĕр, тĕслĕ металсем тата ылттăн, чаплă вăрмансем, пулă тытмали пуйан вырăнсем пур.

Украина Советлă Социалисăмлă Республикĕ

Украина Советлă Социалисăмлă Республики ССР Сойузĕн кăнтăр хĕвеланăçĕнче, Хура тинĕспе хĕвеланăç чикĕ хушшинче выртать. Украинăна хураçĕрсен тĕп масси кĕрет. Çак лайăх условисем Украинăра йалхуçалăхне пур йенчен те (тĕшлĕ тырă кулјтурисем, кукуруза, сахăр кăшманĕ, хĕвелçаврăнăшĕ, çавăн пекех тата выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç) сарлакан аталанса кайма пулăшнă. УСС Республикин, кунсăр пуçне çĕрайĕнчи пурлăхсем нумай, промышленнăç ваљљи паха Донбас кăмрăкĕпе Кривой Рог тимĕр руди пур. Паха йышши тимĕр рудипе коксланакан çĕркăмрăкĕ пек çывăх район ССР Сойузĕнче урăх çук. Кăмрăкпа тимĕрсĕр пуçне Украинăра тата марганец, тăвар, чĕрмĕл, çĕрайĕнчи тата ытти усăлă пурлăхсем те пур.

Украинăн чи пысăк йуханшывĕ—Днепр (пысăкăшĕ тĕлĕшпе Атăлпа Дунай хыççăн Йевропăра виççĕмĕш йуханшыв). Вăл Украинăн ырă тăпралă тата ÿсен-тăранлă висĕ тĕп облаçĕ—Полесйе, Вăрманлă çеçен хир тата Çеçен хир урлă йухса иртет.

Тĕп национаљнăç—украинецсем халăхăн 80 процентĕ пулса тăраççĕ, ыттисенчен пуринчен ытларах—вырăссем (10 процент), вĕсемсĕр пуçне тата йеврейсем, поляксем, нимĕçсем, молдавансем те пур. Украинăн кăнтăр-хĕвеланăçĕнче УСС Республикне кĕрекен Молдави автономлă республики пур.

Халăх йышĕпе те, хуçалăх тĕрекĕ тĕлĕшпе те Украинă ССР Сойузĕнче РСФС Республики хыççăн иккĕмĕш вырăнта тăрать.

Сойузăн социалисăмлă хуçалăхĕнче Украинă питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Украинă—ССР Сойузĕн кăмрăкпа металлургин пĕрремĕш никĕсĕ. Украинă—йăвăр промышленнăç ваљљи машинсем тăвакан пысăк район, кунтах химии тĕп промышленнăçĕ, електричествă промышленнăçĕ. Украинă çавăн пекех тата вăйлă аталаннă йалхуçалăхлă çĕршыв (тырпул, сахăр кăшманĕ, ы.т.).

Украинă Совет Сойузĕн аллăмĕш пайне тата пĕтĕм халăхăн пиллĕкĕмĕш пайне йышăнса тăрать, çав вăхăтрах вăл пĕтĕм пухса илекен тырпулран чĕрĕк пайне, пĕтĕм сахăрăн висĕ пайĕнчен икĕ пайне, кăмрăк, чукун, тăвар продукцинчен çурри ытларахăшне тăвать, пĕтĕм Сойузĕпе туса кăларакан машинăсемпе химии продукцинчен пиллĕкмĕш пайне кăларать. Пĕтĕм чукунçулсен ултă пайĕнчен пĕр пайĕ Украинăра.

Украинăра çĕркăмрăк, тимĕр-тăмăр, хура металурги, химии промышленнăçĕ, машиностройени, електропромышленнăç вăйлă сарăлнă. 1913 çулхипе танлаштарсан, кăмрăк кăларас тата чукун шăратас ĕç Украинăра висĕ хут ÿснĕ, машиностройенипе химии промышленнăçĕнчи рабочисен йышĕ ултă хут, електричествă вăйĕ тăвас тĕлĕшпе—вунă хут ытларх ÿснĕ.

Йăвăр промышленнăçĕн пысăкрах центрĕсем çаксем пулаççĕ: Донбас (Сталино, Ворошиловград, Макейевка, Краматорск т. ыт.), Днепр лешйенче—тимĕр рудипе марганец (Кривой Рог, Никопољ), Днепропетровск, Днепродзержинск, Запорожйе, Мариупăљ, Керч.

Сойуз хуçалăх системинче Украинă пысăк вырăн йышăнса тăрать. Украинăран кăмрăк, метал тырпул, тăвар, сахăр, çавăн пекех тата йăвăр промышленнăç машинĕсем килсе тăрать. Украинăна пир авăр (Мускавпа Ивановоран), шултра машинсем (Мускавпа Ленинградран), вăрман (Çурçĕртен), нефтă (Кавказран), пулă (Анат Атăл çинчен) пырса тăрать.

Белоруçси Советлă Социалисăмлă Республикĕ

БССР,— хамăр çĕршыва сыхлас тĕлĕшпе чи паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл Хĕвеланăç Двинапа Днепр шывĕ тăрăхĕнче пире Полјшăран уйăракан хĕвеланăç чиккинче вырнаçнă.

Çĕрпичĕ тĕмескелĕ. Хĕвеланăç çанталăкĕнче Атланти океанĕн влийанийĕ сисĕнет. Нÿрĕ нумайтарах ÿкет. Кăнтăр — хĕвеланăçĕнче çу пăртак сулхăнрах, хĕл самайах ăшă пулать. Кунта хĕл варринчех ăшăтса йарса йухан шывсем пăрсенчен усăлни те пулкалать. Белоруççи Республикĕнче паха йывăçсем (йуман, йелме, вĕрене, граб) ÿсеççĕ. Нÿрлĕх нумай ÿкнипе шурлăхлă вырăнсем нумай.

Çĕрайĕнчи пурлăхсенчен Белоруççи торфпа пуйан.

Мĕн пур халăхсенчен 80 процентне белоруссем йышăнаççĕ, 10 процента йахăн йеврейсем. Ыттисем — вырăссем, украинцăсем, полјаксем.

Патша самани вăхăтĕнче Белоруççи питех те кайа йулнă чухăн çĕршыв пулнă.

Сталинла пйатилеткăсен çулĕсенче Белоруççи ССР хуçалăхпа кулјтур тĕлĕшĕнчен питĕ нумай мала карĕ. Ĕлĕк халăхăн висĕ пайĕнчен икĕ пайĕ хутла пĕлмен, халĕ хутпĕлменлĕхе пĕтернĕ. Патша вăхăтĕнче ирĕк паман белоруççи чĕлхипе халĕ 200 хаçата йахăн тата тĕрлĕрен кĕнекесем çĕршерĕн кăлараççĕ. Аслă шкулсемпе наукăсен Белоруççири академийĕ кĕрекен ăслалăхпа тĕпчев институчĕсем вуншар усна.

Йалхуçалăхне коллективланă пирки вăл нихçанхи пек мар çÿле хăпарнă. Пысăк лаптăк йышăнса выртакан шурсене (700 пин гектар) типĕтсе улăхсем тата акмали çĕрсем тунă. Акмали çĕр лаптăкĕ 2,5 мĕлйун гектартан 4 мĕлйун гектар таран ÿснĕ. Йалхуçалăхĕ выљăх апачĕпе, техникăла кулјтурăсемпе (акмали курăксем, çĕрулми, йĕтĕн кантăр) тата продуктивлă выљăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе специализациленсе пырать. Сыснасем ĕрчетессипе Белоруççи Совет Сойузĕнче пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать.

Белоруççи Республикĕн промышленнăçĕ вăрçăччĕнхинчен 10 хут ытларах ÿснĕ. Белоруççирен ытти республиксене, облаçсене сысна ашĕ, шăрт, вăрман, хут, спичкă, цемент, кĕленче, тумтирсем, машинсем кайаççĕ.

Азербайджан Советлă Социалисăмлă Республикĕ

Лешйен Кавказăн Каçпий тинĕс йенчи хĕвелтухăç пайне йышăнать. Унăн пысăк пайĕ Кура шывĕпе унăн Аракс йатлă йуппи тăрăхри лаптăка вырнаçнă. Вăл Çурçĕрте Мăн Кавказпа, кăнтăрта Кĕçĕн Кавказ сăрчĕн тайлăмĕсемпе çумлă выртать.

Тĕп национаљнăç—Азербайджан туркĕсем пĕтĕм халăхăн пилĕк пайĕнчен висĕ пайне йышăнаççĕ. Унсăр пуçне армйансем, грузинсем, вырăссем, иран халăхĕсем, татсем, талышсем пурăнаççĕ.

Хура тинĕс йенчен вĕрекен нÿрĕ çилсенчен сăртсемпе хÿтĕленсе тăнă

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: пограничник-комсомолец П. С. Ковалјчук дозорта. Вăл шпионсемпе диверсантсене тытнăшăн темиçе хутчен те благодарниç илнĕ (Çурçĕр Хĕвеланăç чикки).

Ларионов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Армени Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн Государствӑ Гербӗ.

Туркмен Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн Государствӑ Гербӗ.

Узбек Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн Государствӑ Гербӗ.

Таджик Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн Государствӑ Гербӗ.

Казах Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн Государствӑ Гербӗ.



Киргиз Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗн Государствӑ Гербӗ.

Советлӑ Социалисӑмлӑ Республиксен Сойузӗ

пирки Азербайджанра климӑт типӗ. Айлӑмра ҫу кунӗсем, Йегипетри пек, питӗ шӑрӑх. Кунта шӑварса тӑракан ҫӗрсем ҫинче чи вӑрӑм ҫӳслӗ ҫӗрмамӑк сорчӗсем (йегипет, сиайленд) пысӑк тухӑҫ параҫҫӗ. Ҫӗрмамӑксӑр пуҫне шӑваракан ҫӗрсем ҫинче ԓуцернӑ, рис акса тӑваҫҫӗ. Сӑрт улӑхӗсенче фруктӑ, иҫӗм ҫырли сачӗсем нумай. Пурҫӑн та нумай тӑваҫҫӗ.

Кӑнтӑрти чикӗ хӗрринче, нӳрӗ нумай ӳкекен Ленкораң тӗлӗнчи тинӗс хӗрринчи айлӑмра чей, лимон, апеԓсин, мандарин тата ытти ӳсентӑрансен плантацийӗсем тунӑ. Ҫулла—тусем ҫинче, хӗлле—айлӑмсенче выԓӑхсем ҫӳреҫҫӗ.

Азербайджанӑн тӗп пуйанлӑхӗ—нефтӑ (Апшерон ҫурма-утравӗ). Азербайджан—ССР Сойузӗн тӗп нефтӑ бази. Азербайджан нефтипе ССРС тӗнчипе пӗрремӗш вырӑн йышӑнса тӑрат̆.

Револђуциччӗнхипе танлаштарсан нефтӑ кӑларасси виҫӗ хут ӳснӗ. 1913 ҫулта нефтӑ 7 мӗлйун тоннӑ кӑларнӑ, 1936 ҫулта —21 мӗлйун тоннӑ. Нефтӑ кунтан ик йеннеле: Каҫпий тинӗсӗпе Астрахане, унтан Атӑл тӑрӑх ССР Сойузӗн шалти рынӑкне; трубасем тӑрӑх Батума, унтан йут патшалӑхсене кайат̆.

Бакура нефтӑ продукцийӗнчен ӗҫлесе тавар кӑларакан промышленнӑҫ вӑйлӑ. Баку хули халӑх хисепӗпе ССР Сойузӗнче виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑнат̆.

Азербайджанран ССРС-ӗн ытти республикисене пуринчен ытла нефтӑпа нефтепродуктӑсем, ҫӗрмамӑк, рис, фруктӑсем, ерех, пурҫӑн, пулӑ кайса тӑраҫҫӗ.

Грузи Советлӑ Социалисӑмлӑ республикӗ

Лешйен Кавказӑн хӗвеланӑҫ йенне йышӑнса тӑрат̆. Ҫурҫӗр йенчен вӗрекен сивӗ ҫилсенчен ӑна Кавказ тӑвӗн тӳрчӗ хӳтӗлесе тӑрат̆, унӑн хӗвеланӑҫӗнчи пайӗ Хура тинӗсрен нӳрлӗ ӑшӑ ҫилсем вӗрмеле выртат̆.

Ҫутҫанталӑкӑн тӗрлӗхӗпе, илемлӗхӗпе тата пуйанлӑхӗпе Грузи Сойузра паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрат̆.

Грузи ССР Сойузӗн ҫӗр лаптӑкӗнчен 1/3 процентне ҫеҫ йышӑнат̆. Грузине ӗмӗрех йурсемпе витӗнсе тӑракан Кавказ тата Хура тинӗс хӗррипе тӑсӑлса выртакан ӗмӗр хӗл курман айлӑмсем кӗреҫҫӗ. Ҫӳлӗ ту улӑхӗсемпе ҫеҫен хирти выԓӑх ҫӳретмели вырӑнсемпе пӗрлех кунта субтропикри пек питӗ хаклӑ куԓтурӑсем: чей, апеԓсин, лимон лартса тӑвакан лайӑх ҫӗреҫлӗ районсем те пур.

Бук, самшит, тисс йышши йӑвӑҫсем ӳсекен вӑрмансем калама та ҫук хаклӑ тӑраҫҫӗ.

Грузи нумай шывлӑ, хӑвӑрт йухакан ҫырмасемпе пуйан. Кунтах ҫӗркӑмрӑкӗ (Ткварчели, Тквибули), нефтӑ (Ширак ҫеҫен хирӗ).

Минерал чӗртаварӗсенчен уйрӑмах марганец (тӗнчере паллӑ вырӑнта тӑракан Чиатур марганци), унтан барит, ҫуртйӗр материалӗсем. Уйрӑмах—минераллӑ ҫӑлкуҫӗсем йенӗпе паллӑ вырӑнта тӑрат̆.

Грузинсем авалхи, куԓтур тӗлӗшпе ҫӳлте тӑракан халӑх. Грузинсем кунти халӑхсен виҫӗ пайӗнчен икӗ пайне йышӑнаҫҫӗ; иккӗмӗш вырӑнне (10 процента йахӑн) армйансем йышӑнаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне абхазцӑсем, аджарсем, осетинсем, вырӑссем, украинцӑсем, грексем, йеврейсем тата ытти халӑхсем те пур.

Грузине икӗ автономлӑ республикӑ: Абхаз АСС Республикӗ (тӗп хули Сухуми) тата Аджар АСС Республикӗ (тӗп хули Сталинир) кӗреҫҫӗ.

Тинӗс хӗрринчи нӳрлӗ субтропиксен районӗнче чей, цитрус таврашсем (апеԓсин, лимон, мандарин), тунг (техникла ҫусем паракан ӳсентӑран), евкалипт, камфар лаврӗ, гераң тата ҫавӑн пек ытти паха куԓтурсем ӳсеҫҫӗ. Абхазире чи лайӑх суртлӑ табак (турецкий табак) тӑваҫҫӗ.

Имеретире (Кутаиси ҫывӑхӗнче) виноград лартса тӑваҫҫӗ, пурҫӑн хурчӗсене ӗрчетеҫҫӗ. Кахети (Курапа Алазаң шывӗсен йӳпписенче) талкӑшӗпех ҫимӗҫлӗ йӑвӑҫ пахчисемпе тата виноградниксемпе витӗннӗ, хӑйӗн ерехӗсемпе мухтава тухнӑ.

Промышлӑннӑҫла центрсенчен пысӑкраххисем ҫаксем: Тбилиси. Вӑл Грузипе Азербайджана тата Арменине промышленнӑҫ машинӑсем парса тӑрат̆. Кутаиси—апат-ҫимӗҫ, пурҫӑн тата хими (барит) промышленнӑҫӗпе паллӑ. Чиатура тата Джугели. Кунта марганца кӑлараҫҫӗ. Тквибулипе Ткварчелире ҫӗркӑмрӑкӗ кӑлараҫҫӗ. Батумире—нефтӑ тата апат-ҫимӗҫ промышленнӑҫӗ, Сухумире—табакпа апат-ҫимӗҫ промышленнӑҫӗ.

Совет влаҫӗ пулнӑранпа Грузире ҫӗнӗрен 200 предприйатине йахӑн тата темиҫе гидроелектростанци тунӑ. Вӑрҫӑччӗнхи вӑхӑтпа танлаштарсан промышленнӑҫ продукци 19 хут ытларах кӑларат̆.

Грузирен марганец, табак, чей, ҫырла ҫимӗҫсем (вӑл шутра апеԓсин, лимон, мандарин, ерех), пурҫӑн кайса тӑрат̆.

Армени Советлӑ Социалисӑмлӑ республикӗ

Вӑл лешйен Кавказ вӑта ҫӗрӗн кӑнтӑр йенчи пайӗнче, ҫурҫӗрпе хӗвеланӑҫӗ йенчи Грузи тата ҫурҫӗрпе хӗвеланӑҫ йенчи Азербайджан хушшинче. Арменин кӑнтӑр йенчи чикки Иран чиккипе йунашар пырат̆.

Армени—сӑртлӑ ҫӗршыв. Вӑл йери-тавра ту хырҫисемпе ҫавӑрӑннӑ тӳрем сӑртлӑх ҫине вырнаҫнӑ, ту хырҫисем вара нӳрӗ ӳкессине чарса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа Арменире типӗ, питӗ улшӑнакан ҫанталӑк тӑрат̆. Тӑпрасем, пуринчен ытла вулкансенчен тухнӑскерсем, йӑвӑҫ курӑксене ӳсме сӗткен ытлӑн-ситлӗнех параҫҫӗ.

Армйансем, авалхи куԓтурӑлӑ халӑх, пӗтӗм пурӑнакансенчен 85 процент таран шутланаҫҫӗ. Армйансем Турци чиккин леш йенче те пур. Армйансенчен пӗр мӗлйун ҫынна йахӑн Армени тулашӗнче—Сойузӑн ытти республикисенче, пуринчен ытла Кавказра пурӑнаҫҫӗ. Армйансемсӗр пуҫне Арменире тата тӳрксем, грузинсем, вырӑссем пурӑнаҫҫӗ.

Арменин йалхуҫалӑх тӗп районӗ Аракс шывӗ лапамӗнче. Кунта шӑварса тӑракан ҫӗрсем ҫинче ҫӗрмамӑкӗ чылайах акса тӑваҫҫӗ, садсемпе виноградниксем нумай. Ытти вырӑнсенче пуринчен ытла выԓӑх-чӗрлӗх ӗрчетеҫҫӗ; вӑл вырӑнсенче тырпул хӑйсене кирлӗ таран ҫеҫ тӑваҫҫӗ.

Арменире апат-ҫимӗҫ промышленнӑҫӗ (ҫырла консервисем, ерех, т. ыт. те), пир-авӑр промышленнӑҫӗ, сӑрт-ту промышленнӑҫӗ сарӑлнӑ (пӑхӑр, пемза, артик туфӗ т. ыт. те).

Йулашки ҫулсенче Армени—Аракс лапамӗнчен пин метр ҫӳлерех выртакан Севан кӳллинчен Занга тӑрӑх Аракса йухса тухакан шывпа уса курма тытӑннӑ. Занга шывӗ ҫинче темиҫе електростанци тӑваҫҫӗ, вӗсенчен пӗрине, Канакир станцине, туса та ҫитернӗ ӗнтӗ.

Арменирен ытти вырӑнсене пӑхӑр, стройматериалсем, ҫырла таврашӗсем, конйак, ерех, ҫӑм, сӑрансем кайса тӑраҫҫӗ.

Туркмени Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗ

Каҫпий тинӗсӗпе Аму-Дарйа шывӗ хушшине вырнаҫнӑ. Унӑн кӑнтӑр чикки тӑршшӗпе ССРС-не Иранпа Афганистанран уйӑрса тӑракан ҫӳллӗх мар сӑртсем выртаҫҫӗ.

Туркменире, Йегипетри пекех, хӗвел хытӑ хӗртет, ҫӑмӑрсем сахӑл ҫӑваҫҫӗ. Ҫӗрӗҫне шывпа шӑварса ҫеҫ туса пыма май пур. Шыв хуҫалӑхӗ пуринчен ытла Аму-Дарйа тӑрӑхӗнче.

Туркменире Кара-Кум пушхир таҫтан сарӑлса выртат̆, унта кӗтӳсем ҫеҫ ҫӳреҫҫӗ.

Ҫӗр талкӑшӗ йенӗпе илсен, Туркменистан Украинӑпа пӗр пек, халӑх унта Украинӑринчен 30 хута йахӑн сахалтарах. Туркменсем кунта мӗн пур халӑх хисепӗнчен тӑватӑ пайран виҫӗ пайне йышӑнаҫҫӗ. Туркменсемсӗр пуҫне хуласенче—вырӑссемпе армйансем, хула тулашӗнче—узбексем, таджиксем, кара-калпаксем пурӑнаҫҫӗ.

Уй-хир ӗҫӗнче Туркменистан йегипетский ҫӗрмамӑкӗ акнипе, выԓӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ҫӗрте кавалери валԓи ӑратлӑ лашасем тата каракуԓ сурӑхӗсем ӗрчетнипе паллӑ пулса тӑрат̆. Хӗрарӑмсем кавир тӗртеҫҫӗ. Йулашки ҫулсенче йалхуҫалӑхӗсӗр пуҫне апат-ҫимӗҫ промышленнӑҫӗпе ҫӑмӑл промышленнӑҫ хытӑ ӳссе кайнӑ. Каҫпий тинӗсӗн Челекен утравӗпе Небидаг сӑрчӗсем ҫинче—нефтӑ, Кара-Кумра—кӗкӗрт, Каҫпий тинӗсӗн Кара-Богаз-Гола заливӗ тӗпӗнчен мирабалит кӑларма тытӑннӑ.

Туркменистанран ытти республиксене ҫӗрмамӑкӗ, ҫырла-ҫимӗҫ, пурҫӑн, каракуԓ, кавирсем, нефтӑ кайса тӑрат̆.

Узбек Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗ

Вӑл Вӑтам Ази вӑта ҫӗрӗнче, хӗвеланӑҫӗ йенчи айлӑмлӑ Туркменистанпа хӗвелтухӑҫӗ йенчи Таджикистанпа Киргизстан хушшинче вырнаҫнӑ. Узбекистанӑн чылай пайне шыв кӑларса тырпул тума лайӑх сӑрт умӗсем тата лапам вырӑнсем йышӑнса тӑраҫҫӗ.

Узбекистанра шывпа шӑвармали вырӑнсем пӗтӗм Туркмени, Таджикистан, Киргиз республикӗсене пӗрле илнинчен те ытларах.

Узбекистана—Фергана лапамӗн ытларах пайӗ, унсӑр пуҫне Ташкент, Голодностеп (кӑнтӑр йенчи пайӗ), Самарканд, Бухара, Хорезм оазисӗсем кӗреҫҫӗ.

Узбексем тӳрксенчен тухса ирансемпе хутшӑннӑ халӑх; вӑл Вӑтам Азири халӑхсенчен чи йышли тата халԓхи вӑхӑтра чи куԓтурли. Узбексем пурте тенӗ пекех хӑйсен вырӑнӗсенче ҫӗр ӗҫлесе пурӑнаҫҫӗ, вӗсем шывпа шӑварса ҫӗр ӗҫлеме ӑста, ҫӗрмамӑкӗ лайӑх тӑваҫҫӗ. Узбексем Вӑтам Азири ытти республиксене те кадрсем парса тӑраҫҫӗ. Сахал йышлӑ халӑхсенчен йышлӑраххи Аму-Дарйан анат вӗҫӗнче пурӑнакан кара-калпак халӑхӗ. Узбекистан хулисенчен чылайӗшӗ пит авалхи хуласем. Вӗсем чи пысӑк оазиссем хушшине вырнаҫнӑ. Хуласем тавра—кишлаксем.

Узбекистан Вӑтам Азири республиксенчен чи вӑйли, пуйанни.

Вӑтам Азинчи мӗн пур халӑхран ҫурри ытла, промышленнӑҫӑн пилӗк пайӗнчен тӑватӑ пайӗ, чукунҫулсен виҫӗ пайӗнчен икӗ пайӗ, Узбекистана кӗреҫҫӗ.

Узбекистан ССР Сойузӗнче чи нумай ҫӗрмамӑкӗ тӑваканӗ. Туркменистана, Таджикистана тата Киргизстана пӗрле илсен те вӗсем ҫӗрмамӑкӗ Узбекистанран ултӑ-сакӑр хут сахалтарах тӑваҫҫӗ. Ҫӑмпа пурҫӑн тӑвас тӗлӗшпе те Узбекистан Вӑтам Азире малта тӑрат̆.

Узбекистанра ҫырла, пахчисемпе виноградниксем те нумай. Тырӑ Казакстанпа Киркизстанран тата Турксиб тӑрӑх Хевеланӑҫ Ҫӗпӗртен кӳрсе килеҫҫӗ.

Узбекистана кӗрекен Кара-Калпак АСС Республикӗ хӑйӗн вӑтаҫӗр пайӗпе Аму-Дарйан анат вӗҫӗнчи вырӑнсене, чикӗ хӗррисемпе—Уст-Урт тата Кзыл-Кум пушхирӗсене йышӑнса выртат̆. Аму-Дарйа йухса тухнӑ ҫӗрте пулӑ тытаҫҫӗ.

Промышленнӑҫла предприйатисенчен Узбекистанра пуринчен ытла ҫӗрмамӑкӗ тасатакан, ҫу ҫапакан, ҫырла таврашӗнчен консервӑсем тӑвакан, ҫӑм ҫавакан тата пурҫӑн ҫӑмхалакан фабрикӑсемпе заводсем пур.

Пир-авӑр тӗртекен икӗ фабрик (Ташкентра тата Ферганара) пур. Ҫӗр айӗнчен нефтӑ, пӑхӑр, строителствӑ материалӗсем туса кӑлараҫҫӗ.

Ташкентра пир-авӑр тӗртекен машинсем тӑвакан завод тата Ташкент ҫывӑхӗнче азотпа тук комбиначӗпе пӗрле Чирчик пысӑк гидростанцийӗ туса ҫитереҫҫӗ.

Вӑрҫӑччӗнхипе танлаштарсан промышленнӑҫ ултӑ хут ытла тавар туса кӑларат̆, ҫӗрмамӑкӗ ик-виҫ хут ытла пухса илеҫҫӗ.

Кунтан ытти республиксене ҫӗрмамӑкӗ, пурҫӑн, ҫӑм, ҫырла таврашӗсем, каракуԓ, пулӑ кайса тӑрат̆.

Таджик Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗ

Вӑл Памирпе Алайӑн ҫӳллӗ тӑвӗсем ҫинче, Вӑтам Азин кӑнтӑрпа хӗвелтухӑҫ кӗтессинче. Ун чиккисем хӗвелтухӑҫ йенче Китайӑн хӗвеланӑҫӗнчи провинцийӗне—Синцзйан, кӑнтӑр йенче Афганистан (унтан инҫех мар Англин Индири колонийӗ пуҫланса кайат̆) патне тухаҫҫӗ.

Таджикистана ССРС-чи чи ҫӳлӗ сӑрт тӳписем—Сталин пикӗ (7495 метр) тата Ленин пикӗ (7127 метр) кӗреҫҫӗ.

Хӗвелтухӑҫне кайнӑ ҫемӗн вырӑн ҫӳлленсе пырат̆. Памирте лапам вырӑнсем те 3500 метртан айалти ҫук. Аму-Дарйана йухса тухакан нумай шывлӑ, хӑвӑрт йухакан шывсем сӑртсенчи темӗн пысӑкӗш парсенчен пуҫланса Таджикистанӑн кӑнтӑр чиккипе хӗвелтухӑҫӗнчен хӗвеланӑҫнеле йухаҫҫӗ.

Таджикистанӑн лапам вырӑнӗсем—Сыр Дарйа шывӗ тӑрӑх выртакан Фергана лапамӗ; кӑнтӑр йенче Аму-Дарйана йухса тухакан шывсем хӗрринчи Гиссар тата Вахш лапамӗсем. Афганистанран вӗри ҫил уҫҫӑн вӗрсе тӑнӑ пирки климӑт кунта уйрӑмах вӗри те типӗ.

Таджиксем мӗн ӗлӗкренех пӗр вырӑнта ҫӗр ӗҫлесе пурӑнакан халӑх. Вӗсем Таджик республикӗнче пурӑнакан халӑх хисепӗнчен тӑватӑ пайран виҫӗ пайне йышӑнаҫҫӗ. Хӗвеланӑҫӗнчи Памирте таджиксемпе таванлӑ иран йӑхӗсем, хӗвелтухӑҫӗнчи Памирте—вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекен киргизсем пурӑнаҫҫӗ. Памире хӑйне Горно-Бадахшан автономлӑ облаҫе уйӑрнӑ, унта 40 пин ҫынна йахӑн пурӑнат̆.

Револђуциччен Таджикистан патша Российӗн инҫетри колонийӗ пулнӑ. Халӗ вӑл йалтах урӑх сӑнлӑ ӗнтӗ. Таджикистанӑн тӗп хулине—Сталинабада Термез станцинчен чукунҫул хывнӑ, сӑртсем урлӑ шоссе ҫулӗсем тунӑ (Сталинабадран Ташкента, Ошаран (Киргизи) Хорога—Горно—Бадахшан автономлӑ облаҫӗн тӗп хулине, т. ытти те), вӑл ҫулсем тӑрӑх автомобилсем ҫӳреҫҫӗ. Сталинабад ҫывӑхӗнче пысӑк електростанци туса лартнӑ. Вахш лапамӗнче йегипетский ҫӗрмамӑкӗ тума вуншар пин гектар ҫӗр ҫине шыв йарса тӑраҫҫӗ.

Ытти республиксене Таджикистанран ҫӗрмамӑкӗ, ҫырла-ҫимӗҫ, пурҫӑн, ҫӑм, сайра тӗл пулакан метал тӑприсем (тӑхлан, молибден тата ытти те) йарса тӑраҫҫӗ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: „Ленфиԓм" киностудийӗ тунӑ „Волочаевские дни" фиԓмӑн кадрӗ.

(Сойузфото репродукцийӗ).

Казах Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӗ

Вӑл питех те пысӑк вырӑн йышӑнат̆. Хӗвеланӑҫ йенче Анат Атӑлтан пуҫланса хӗвелтухӑҫ йенче Китай чикки патне тухат̆, ҫурҫӗр йенче Ҫӗпӗре кайакан чукунҫултан пуҫланса кӑнтӑр йенче Ташкент параллелӗ патне ҫитиччен йышӑнат̆. Вӑл хӗвеланӑҫ йенчен хӗвелтухӑҫнеле 3 пин километра йахӑн, ҫурҫӗртен кӑнтӑр йенеле 1500 километр ытла чӑсӑлат̆. Казахстана ҫурмаутравсемсӗр пуҫне пӗтӗм Хӗвеланӑҫ Йевропӑ вырнаҫма пулӗччӗ. Советлӑ Социалисӑмлӑ Республикӑсен Сойузӗнчи Сойузлӑ республиксем хушшинче ҫӗр талкӑшӗпе РСФСР хыҫҫӑн иккӗмӗш вырӑн йышӑнат̆, вӑл вара ытти сойузлӑ республиксене тӑхӑрӑшне пӗрле илсен те, вӗсенчен пысӑкрах.

Казахстанра ҫанталӑк типӗ тӑрат̆, шыв ҫителӗксӗр. Нӳрӗ пуринчен ытла Вӑтаҫӗр тата Хӗвеланӑҫ Казахстанра сахал ӳкет. Казахстан урлӑ каҫакан пысӑкрах шывсем Казахстан тулашӗнчен йухса кӗреҫҫӗ. Казахстанӑн ҫурҫӗрпе хӗвелтухӑҫ пайне шыв парса тӑракан Иртышпа унта йухса кӗрекен ытти шывсемсӗр пуҫне ыттисем пурте хупӑ кӳлӗсене йухса тухаҫҫӗ. Ҫавӑн пек, Урал—Каҫпий тинӗсне, Сыр-Дарйа—Арал тинӗсне тата Или—Балхаш кӳллине йухса тухат̆.

Тӳрем, вӑрмансӑр вырӑнсем, типӗ ҫеҫенхир ытларах. Вӑтаҫӗрпе хӗвеланӑҫ йенчи пайа йышӑнакан вырӑнсенчи выԓӑхсем ҫӳретме ҫеҫ йурӑхлӑ ҫӗрсемпе пӗрлех, ҫурҫӗр, хӗвелтухӑҫӗ тата кӑнтӑр йенӗсенче ҫӗр ӗҫлеме йурӑхлӑ лайӑх вырӑнсем те пур.

Казахстан ҫӗрӗ айӗнче пуйанлӑхсем темӗн терийех нумай. Вӗсенчен паллӑраххисем: Карагандӑри ҫӗркӑмрӑкӗ, Ембӑ шывӗ тӑрӑхӗнчи нефтӑ, пӑхӑр (Джезказган, Коунрад) тата ытти тӗслӗ металсем. Пӗтӗм Сойузри пӑхӑр, тӑхлан, цинк запасӗсенчен ҫурри ытла Казахстан ҫине лекет.

Республикӑра мӗн пур халӑх хисепӗнчен 60 процентӗ патне казахсем. Вырӑссемпе украинцӑсем пӗрле—35 процента йахӑн шутланаҫҫӗ.

Патша самани вӑхӑтӗнче кунта вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекен халӑх пулнӑ. Казахстанра мӗн револђуци пулаччӗнех кӗтӳ кӗтсе выԓӑх ӗрчетесси хуҫалӑхра тӗп вырӑнта тӑнӑ. Выԓӑх-чӗрлӗхе сутма хӑваласа кайма та пулнӑ, анчах ҫӗр айӗнчи пуйанлӑхсене кӑларма чукунҫулсем кирлӗ. Вӗсем вара Казахстанра пулман: Ҫӗпӗре кайакан ҫул та, Оренбургпа Ташкент хушшинчи ҫул та Казахстан чикки тӑрӑх, ун ӑшне кӗмесӗр, „шуҫҫа" иртсе кайнӑ.

Сталинла пйатилеткӑсен ҫулӗсенче Казахстан хуҫалӑхӗ темиҫе ӗмӗр малала карӗ.

Револђуциччӗнхи вӑхӑтпа танлаштарсан чукунҫулсем тӑрӑшӗ виҫӗ хут ҫурӑ ӳснӗ, промышленнӑҫри рабочисен шучӗ—ултӑ хут, промышленнӑҫ продукцийӗ—12 хут. Караганда ССРС-чи виҫҫӗмӗш ҫӗркӑмрӑк никӗсӗ (Донбаспа Кузбас хыҫҫӑн) пулса тӑчӗ.

Ҫӗнӗ строителствӑсене (Риддер, Коунрад, Джезказган, Чикмент т. ыт. те) туса пӗтерсе ӗҫе йарса ҫитерсен, тӗслӗ металсем тупас ҫӗрте Казахстан ССРС-че малти вырӑна тухат̆.

Йалхуҫалӑхӗнче тырпул акса тӑвас, выԓӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫсене тӗпӗ-йӗрӗпе улӑштарнӑ. Кӑнтӑр йенче хаклӑ куԓтурсем: ҫӗрмамӑкӗ, рис, сахӑр кӑшманӗ акса тума тытӑннӑ.

Йалхуҫалӑхӗ самайах ӳснӗ. Промышленнӑҫ продукцийӗ халӑх хуҫалӑхӗнче 53,2 процент йышӑнса тӑрат̆.

Казахстанран ытти вырӑнсене ҫӗркӑмрӑкӗ, нефтӑ, тӗслӗ металсем, тырпул, ҫӗрмамӑкӗ, выԓӑх-чӗрлӗх, ҫӑм кайса тӑрат̆.

Киргиз Советлӑ Социалисӑмлӑ республикӗ

Вӑл Таң-Шаң сӑрчӗсем ҫинче, Китайӑн хӗвеланӑҫ йенчи провинцийӗ—Синцзйан чиккипе йунашар вырнаҫнӑ.

Киргизстан территорийӗ икӗ вырӑнта ҫеҫ сӑрт ҫинчен кӑшт анат̆: ҫурҫӗр йенче—Чуй тата Талас шывӗсен лапамӗнче (Казахстан чикки тӑрӑх), хӗвеланӑҫ йенче—Узбекистан чикки патӗнче. Кунта Киргизстана Фергана лапамӗн хӗвелтухӑҫ хӗрри кӗрет.

Ку лапамсем—Фергана, Чуй тата Талас лаппи—ҫӗр ӗҫлеме лайӑх вырӑнсем. Шывпа шӑваракан уйхирсем, промышленнӑҫ, пӗтӗм хуласем ҫавӑнта. Киргизстан халӑхӗн чылай пайӗ унта пурӑнат̆, чукунҫулсем те ҫав лапамсем патне ҫеҫ пыраҫҫӗ.

Киргизсем тӳрксенчен тухнӑ халӑх. Вӗсем унта пурӑнакансен виҫӗ пайӗнчен иккӗшне йышӑнаҫҫӗ. Пӗр пайӗ Киргизстанӑн ҫурҫӗрти лапам вырӑнсенче пурӑнакан вырӑссемпе украинцӑсем ҫине тата Ферганӑра пурӑнакан узбексем ҫине тивет.

Пролетарилӗ Аслӑ револђуци пулнӑранпа Киргизстан хуҫалӑхра та, куԓтур ӳсӗмӗнче те пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Вырӑнтан вырӑна куҫса ҫӳрекенсенчен нумайӗшӗ пӗр вырӑнтах пурӑнма тытӑнчӗҫ. Йалхуҫалӑхӗ акакан ҫӗр талкӑшне икӗ хут ӳстерчӗ, хаклӑ, ҫӗнӗ йышши куԓтурсемпе пуйанланчӗ, промышленнӑҫ шӑтса ӳсрӗ, транспорт лайӑхланчӗ.

Тӗштырӑсенчен тӗп вырӑнта тулӑ тӑрат̆. Сӑртсем ҫинче пурӑнакансем те хӑйсене кирлӗ чухлӗ тырпул тӑваҫҫӗ, мӗншӗн тесен, Таң-Шаң сӑрчӗн лапамӗсенчен нумайӗшӗ сӗвек. Шыв ҫителӗклӗ. Кӑнтӑрта пирки, тинӗс виҫинчен 3000 метр таран ҫӳллӗ вырӑнсенче те ҫӗр ӗҫлеҫҫӗ. Фергана лапамӗнче ҫӗрмамӑкӗпе ԓуцерна, Чуй лапамӗнче—сахӑр кӑшманӗ, кендыр тата кенаф, Талас лапамӗнче—табак, Иссык-Куԓ кӳлӗ ҫывӑхӗнче—мӑкӑҫ акса тӑваҫҫӗ. Ҫапах та йалхуҫалӑхӗнче тӗп вырӑн выԓӑх-чӗрлӗх ӗрчетесси йышӑнса тӑрат̆, ӑна валԓи кунта сӑртра кӗтӳ ҫӳретмели вырӑнсем нумай. Промышленнӑҫ предприйатисем пуринчен ытла вырӑнти йалхуҫалӑхӗ парса тӑракан чӗр тавара ӗҫлесе кӑлараҫҫӗ. Фергана лапамӗнче ҫӗркӑмрӑкӗ кӑларасси вӑйлӑн ӳссе пырат̆.

Киргизстан ҫӗршывӑк вӑтаҫӗрне ҫӗрмамӑкӗ, кӳршӗлӗ республиксене—ҫӗрмамӑкӗ, выԓӑх-чӗрлӗх, тырпул тата сахӑр парса тӑрат̆. Ҫӗркӑмрӑкӗ тата тырпул ытлӑн-ситлӗн пулнипе Киргизстан Вӑтам Ази республикисем хушшинче малти вырӑн йышӑнат̆.

Узбекистан колхозник-стахановецсен канашлувĕ

Тăшкентра Узбекистанри колхозник стахановецсен канашлувĕ пулса иртнĕ, вăл канашлура 1.500 делегат пулнă. Канашлу 4 кун хушши пынă. Республикăри çĕрмамăкĕ, тĕштырă акса тăвакан, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен колхозсен чи лайăх çыннисем Узбекистанри колхозниксене пахча вырăнĕсем уйăрса парас тата ĕнесĕр колхозниксене пурне те ĕне туянтарас ыйтусене сӳтсе йавнă.

Канашлу çĕрмамăкĕ акса тăвакан мĕн пур колхозниксем патне чĕнсе каланине йышăннă, унта вĕсене çĕрмамăк тухăçне ӳстерессипе татăклă ĕçсем тума сӳтсе-йавма чĕннĕ. Йулашки ларура йалхуçалăхĕнчи чи лайăх стахановецсене Узбекистан правителстви хаклă парнесемпе наградăланă. Колхозри паллă бригадир-орденоносец Ибрагим Рахматов премии шучĕпе çăмăл автомашинă илнĕ.

Делегатсем Сталин йулташ патне саламлă çыру йама йышăннă. (ТАСС).

Нормăна 600 процент тултаракан стахановецсем

ХАРЬКОВ, декабĕрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Сумскри Фрунзе йачĕпе тăракан машинсем тăвакан заводри рабочисем ССР Союзĕн Аслă Совечĕ йачĕпе организациленĕ стахановла вунăкунлăх пысăк ăнăçлăхпа иртсе пырать. Заводра нормăна 600 процент тата ытларах та тултаракан стахановец-шестисотницăсем 100 çынна йахăн. Рабочисем—Алтухов, Педосенко, Мирошниченко, Завĕльнайа йулташсем ĕлĕкрех производствăлă заданисене тултарайман, хальь вĕсем нормăна темиçе хут иртерсе тултараççĕ

Заводра стахановец-двухтысячниксем шăтса тухнă. 1-мĕш номĕрлĕ механически цехĕн слесарĕ Василенко йулташ нормăна 2.017 процент тултаракан пулнă. Механо-сборочнăй цехри стахановец Штань йулташ виççĕмĕш кун ĕнтĕ сменăри нормăна 20 хута йахăн иртерсе тултарать.

Суйлав кампанин активĕсем партине кĕреççĕ

ССР Союзĕн Аслă Совечĕне суйлама хатĕрленни политикăлă активлăха пур çĕрте те халиччен пулманла çĕклесе йачĕ, активиссен çĕнĕ резервисене тупса палартрĕ, Вĕсем хушшинче—политика йĕнченĕ тĕрĕсленнĕ вунăшар боецсем большевикла парти ретне кĕме тăрăшаççĕ.

Уралти вагонсем тăвакан заводра (Нижний Тагил) виççĕр çын—партии тата партире тăман большевиксем—суйлав комиççи членĕсем, агитаторсем тата довереннăйсем пулса ĕçленĕ. Çак актива хальхи вăхăтра пĕтĕмпех завод цехĕсенче йаланах агитациллĕ-пропагандăлă ĕçре çирĕплетсе хăвараççĕ. Нумайĕш активиссем партине кĕме заявленисем параççĕ. Тăхăр стахановеца ПСК(б)П членĕн кандидатне йышăннă. Вунă активиса йертсе пырак н ĕçе лартнă.

Ростов хулинчи Шкирйатов йачĕпе тăракан çĕвĕ фабрикĕнчи парти организацийĕ суйлав кампанинчи чи лайăх 24 активиса парти ретне илнĕ.

(ТАСС).

Йĕтĕн тыллакансен рекорчĕ

ВОЛОГДА, декабĕрĕн 27-мĕш. (ТАСС). Й. А. Арташевăпа А. Ф. Рагина колхозницăсем йĕтĕн тыллас ĕçре облăçра чи малтан стахановла методпа ĕçлеме пуçланă. Вĕсем йĕтĕн туса илес ĕçре нумай стахановецсене вĕрентсе çи ĕнтернĕ.

Суйлав кампани кунĕсенче йĕтĕн тыллакансем хушшинче социалисăмла ăмăртун çĕнĕ хумĕ çĕкленсе кайнă. Грйазовецк районĕнчи колхозницă Александра Петровна Лебедева Аслă Советăн пĕрремĕш депутачĕ Сталин йулташ йачĕпе йĕтĕн еçĕнчи çулĕ ĕçтухăçлăхĕн çĕнĕ рекордне тунă Вăл сменăра 907 килограм йĕтĕн сӳсĕ тылланă. Тепĕр темиçе кун иртсен Арташева ученици—Чебсар районĕнчи „Красный пахарь“ ертел колхозници Никонова пилĕк сехет çурă хушшинче Санталов агрегачĕпе 715 килограм йĕтĕн сӳсĕ тылланă. Унăн йулташĕ Николайева çав вăхăтрах 670 килограм тылланă.

„Путь Ленина“ колхоз машинисĕ Гришинев машин çине йĕтĕн парса тăракан Коротковăпа тата Туриковăпа пĕрле сменăра Антонов машинипе 1.095 килограм тылланă.

Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче Кубино-Озерск районĕнчи „Организатор“ колхозри стахановка Мэнефа Ситенева вунă сехет хушшинче 1.052 килограм тылласа мĕн пур халиччен пулнă рекордсенчен иртернĕ.

Ситенева хăйĕн рекордне ССР Союзĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш çессийĕ йачĕпе тунă.

Вологда облăçĕнчи йĕтĕн акса тăвакансем историлĕ сессире вĕсен йуратнă стахановецĕсем, облăçри ĕççыннисем ССР Союзĕн Аслă Советне суйланă Й. А. Арташевăпа А. Ф. Рагина пулса хутшăннипе мухтанаççĕ.

Магнитогорски металургсен çитĕнӳвĕсем

МАГНИТОГОРСК, декабĕрĕн 26-мĕш. (ТАСС). Магнитогорскри Сталин йачĕпе тăракан металлурги завочĕн блюминг коллективĕ çулталăкри плана срукченех тултарнă. 1.393 пин тоннă металл прокат туса кăларнă. Блюминговецсем планран иртерсе 35.000 тоннă металл прокат туса кăларма обйазателствă илнĕ.

Декабĕрĕн 26-мĕшĕнче тăваттăмĕш доннă коллективĕ çулталăкри программăна тултарнă. 470 пин тоннă чукун шăратса кăларнă. Декабĕрĕн 25-мĕшĕнче комсомолецсен тăваттăмĕш мартен коллективĕ çулталăкри плана тултарнă. Вăл иртнĕ çулхинчен 22 092 тоннă хурçă ытлашши шăратса кăларнă. (ТАСС)

Комбайностроени çинчен сӳтсе-йавма пухăннă Пĕтĕм Союзри канашлу

„Сталинец 1“ комбайн конструкцине лайăхлатни

Дон-çи Ростов, 28-XII. (ТАСС). Ростсельмаш заводра „Сталинец-1“ комбайн конструкцине лайăхлатасси çинчен сӳтсе йавма пухăннă Пĕтĕм Союзри канашлу хăйĕн ĕçне пĕтернĕ. Канашлура комбайнерсем, завод рабочийĕсем, инженерсем, конструкторсем, ăслăлăх организацисен представителĕсем пулнă. Завод машинăн пахалăхне лайăхлатма палăртнă мероприйатисене вĕсем ырланă.

Пĕтĕмĕшпе илсен комбайн конструкцинче 200 йахăн тӳрлетӳ тунă. Машинăн сӳремели пайĕсене вăйлатаççĕ, хăватлărах урапасем тăваççĕ. Виççĕмĕш хăвартлăх çинчен те ыйту татнă. Комбайнерсен сĕнĕвĕ тăрăх комбайн çинче вăрлăх тасатассине вăйлатаççĕ, вăл вăрлăха лайăхрах тасатма май парать. Касакан аппарата „Коммунар“ комбайнăнни йевĕрлине лартаççĕ. Комбайнăн инструменчĕсене тата запаслă пайĕсене тепĕр хут пăхса тухнă. Çак тӳрлетӳсене тусан комбайн çирĕпрех, тӳсĕмлĕрех, ĕçлеме те, ăна пăхса пыма та меллĕрех пулать.

Канашлу участникĕсем СТЗ—НАТИ тата ЧТЗ тракторсем вальли çав заводра туса хатĕрленĕ „Сталинец-5“ комбайн образецне пăхса тухнă тата социалисăмла уйхирĕн çак çĕнĕ карапне лайăх хак панă.

Кантăр çапмали сложнăй молотилкă

Харьков 28-XII. (ТАСС). Харьковри „Серп и Молот“ заводăн експериментлă цехĕнче Совет Союзĕнче пуçласа кантăр çапмали пĕрремĕш сложнăй молотилкă туса хатĕрленĕ, вăл çапнă вăхăтрах вăрлăхне те тасатса тата суртласа пырать. Çĕнĕ молотилкă йалхуçалăх ĕçĕнчи чи нумай ĕç алли йышăнакан процессенчен пĕрне пĕтĕмĕшпех механизацилет. Унăн пройектлă пултарулăхĕ—пĕр сехетре 1.200—1.300 кĕлте. Ун çинче 12 рабочи ĕçлет. Вăтам шутпа кашни рабочи пуçне сехетре 100—108 кĕлте çапать, алăпа ĕçленĕ вăхăтра пĕр çын сехетре 12 кĕлте çеç çапма пултарать.

Башкир республикĕнчи кăмрăк

УФА, декабĕрĕн 28-мĕш. (ТАСС). Алшейевăран 15 километртра (Уфаран хĕвеланăçнеле) темиçе çул кайарах çĕркăмрăк сийĕсем пуррине тупнă пулнă. Халĕ кăмрăк пластисен сийĕсем тата кăмрăк запасĕ пуррине пĕлнĕ. 50 тваткăл километр талккăшĕнче кăмрăк запасĕ 47 мĕлйун тоннă, вĕсенчен усă курма хатĕр кăмрăк 6 мĕлйун тонна йахăн шутланать.

Кăмрăка лабораторинче тĕпчесе тата çунтарса опыт туса пăхса унăн кĕллĕхĕпе нӳрлĕхĕ Мускав патĕнчи кăмрăкăнни пекех пулнине пĕлнĕ. Башкири правителствин заданийĕ тăрăх, çитес çывăх кунсенчех промышленнăçлă испытани туса пăхма 500 тоннă кăмрăк кăлармала.

Франци компартин сйесĕнче

АРЛЬ, декабĕрĕн 28-мĕш. (ТАСС). Франци коммунисла партин тăххăрăмĕш сйесĕн декабĕрĕн 27-мĕшĕнчи касхи ларувĕ партин вырăнти организацисен ĕçĕсем çинчен тунă докладсене сӳтсе-йавнă. Тухса калаписем пурте вырăнти организацисем парти Тĕп Комитечĕн политикипе пĕтĕмĕшпех килĕшни çинчен, коммуниссен влийанийĕ Францири промышленнăçлă, çавнашкалах тата йалхуçалăхлă районсенче те палăрмалах ӳсни çинчен калаççĕ.

Габриел Пери хăйĕн сăмахĕнче колонилĕ çĕршывсенчи халăхсем пирки Францин обйазăннăçĕ çинче чарăнса тăнă. Пери тата Алжир делегачĕ Франци правителствине Çурçĕр Африкăри туземцăсем пирки панă хăйĕн сăмахне пурнăçламаншăн айăпласа, колонисенчи халăха политикăлă правасем пама тата туземцă-хресченсен йăвăр пурнăçне çăмăллатма мерăсем йышăнма ыйтнă. Пери фашиссем Франци колонисенче ашкăннине тăрă шыв çине кăларакан фактсене кăтартса парса çапла каланă: „Франци, Францин Çурçĕр Африкинче, Испани Марроккинче мĕн пулнă, унта Франко Гитлерпа Муссолини пулăшнипе хăйĕн пăлхавне хатĕрленĕ, çавă ан пултăр, тет пулсан, Франци правителствин колонисен администрацине тасатмала тата Çурçĕр Африкăран Гитлерпа Муссолини агенчĕсене хуса кăлармала“.

Испанири фронтсенче

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх семинарийе тата Теруелри граждăн губернаторĕн çуртне вырнаçнă пăлхавçăсен пурнăçĕ питĕ йăвăр. Пăлхавçăсем çуртсенчен тухма тата республиканецсене парăнма тăракансене пурне те персе пăрахаççĕ.

Теруеле республикă правителстви тата политикла партисен представителĕсем, вăл шутрах Долорес Ибаррури пынă. Вĕсем Теруелре тыткăна илнисем патне пырса, вĕсемпе калаçнă. Тыткăна илнисем вĕсене Испани республики йачĕпе — „урра“ кăшкăрса саламланă.

Декабĕрĕн 27-мĕшне касхине фашиссен артиллерийĕ Мадрид çине татах бомбăсем пăрахнă. Республикă батарейĕсем хирĕç персе фашиссене бомбă пăрахма чарса лартнă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Тĕп фронтăн кăнтăр йенчи участкăри Китай çарĕсен тĕп вăйĕсем Ханчжоуран (Чжецзйан провинцин халĕ те кăнтăр-хĕвеланăçнелерех столици) йапонцăсене хирĕç тăраççĕ. Китай çарĕсен ушкăнĕ, йапонцăсен тылне шала керсе, Шанхайран хĕвеланăçнелерех тата кан ăраларак çапăçаççĕ. Вăл ушкăнăн малта пыракан чăсĕсем Йацзы йуханшывĕ йухса тухакан районра çапăçакан Китай çарĕсемпе çыхăну тытаççĕ.

Çурçĕр Китайра Йапони чаçĕсем Шаньдун провинцин столицине—Цзинань хулине йышăнса илнĕ. Йапонцăсем Циндаона (Сарă тинĕс хĕрринчи, Шаньдун провинцинчи пысăк порт) десант антарма тăнă. Анчах ăна Китай çарĕсем ачма паман. (ТАСС).

Татареску правителстви отставка тухнă

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Татареску пуç пулса тăракан Румыни правителстви парламентăн йулашки суйлавĕнче кирлĕ ытларах сасă илеймен пирки, декабĕрĕн 28-мĕшĕнче отставкăна тухнă.

Правителствă тума фашисла ушкăн (национал-христиансен парти) руководителне Гогана хушнă. Вăл правителствăна пĕтĕм националисла ушкăнсен представителĕсенчен йĕркелеме шутлать. (ТАСС).

Радио саракан çĕнĕ станци

Çĕнĕ çул пуçламĕшĕнче Çыхăну Халăх Комиссариачĕн радио саракан кĕске хумлă хăватлă çĕнĕ станци йаланлăхах ĕçлеме тытăнать.

Ку станцийе 1936 çулта тума пуçланă. Вăл хальь пĕтĕмĕшпе илсен хатĕр ĕнтĕ. Ăна совет специалисĕсем конструкцилесе тунă. Станцийе радиотехникăн йулашки чи вĕрçĕнĕ техникипе оборудовани тунă. Автотехникăпа ытларах усă курнипе унта питĕ сахал çын ĕçлемеле пулать.

Кĕске хумсем сарăлассин уйрăмлăхĕсене пула çĕнĕ станцине илтме пултаракан радиус ССР Союзĕнчи Коминтерн йачĕпе тăракан чи хăватлă радио саракан станцин радиусĕнчен те тем терийех пысăк. Ăна Инçет-Хĕвелтухăçĕнче, Вăтам Азире, Çĕпĕрте тата Арктикăра та илтме пултараççĕ. (ТАСС).

Колхоз строителстви ӳсет

ТАВАЙ. Йантăрчă йалсоветне кĕрекен колхозсенче кăçал çĕнĕ витесем туса лартрĕç. „Çĕн çул“ колхоз Октăбĕр револйуци 20 çул тултарнă тĕле çĕнĕ клуб, тата хальь сысна вити турĕ. Çавăн пекех Йантăрчăри „Çулăм“ колхоз 30 лаша вырнаçмалăх ăшă вите туса лартрĕ.

И. Николайов.

— ТЕМТЕПĔР —

Йăвăçа химилĕ майпа типĕтни

Англири „Вест Коуст Ломбермен“ журнал йăвăçа химилĕ майпа типĕтни çинчен çырать. Йăвăçа типĕтиччен малтан тăвар шывĕпе шӳтереççĕ, унтан ăна сушилкăра йе ахалех типĕтеççĕ. Çапла майпа типĕтнĕ йăвăç варĕнчен типсе пырать тата вăл пĕрре те çурkаланмасть.

Малтан тăвар шывĕпе йĕпетнĕ йăвăç браксăр тата хăвăрт типет, унăн ăшĕнчи нӳрĕк пилĕк хут чакать.

Йăвăçа химилĕ майпа типĕтни унăн пахалăхне чакармасть.

(„Лесная промышленность“).

Халиччен пулман йурлă хĕл

Кăçалхи пек йур нумай пулнине Ленинградра пурăнакансем йулашки çичĕ çул хушшинче курманчĕ. Хулана тасатса тăракан трест работникĕсем сăнанă тăрăх кăçал пĕр уйăх хушшинче иртнĕ çул хĕлĕпе çунă чухлĕ йур çунă.

Хальь хулари урамсенчен йур туртарас ĕçре 800 автомашинă, 600 лав ĕçлеççĕ.

(„Ленинградская правда“).

Пакшасем куçса çӳрени

Пакшасем хырă вăрманĕнче те, хутăш вăрмансенче те пулаççĕ, пуринчен ытла вĕсем чăрăш вăрманĕнче нумай. Пакшасем йаланах вырăнĕ-вырăнĕпе пулаççĕ, тата час-часах улшăнса тăраççĕ. Пакшасем вырăнтан вырăна куçса çӳренине ăслăлăхра миграци теççĕ. Пуринчен ытла вĕсем çула тата кĕркунне куçаççĕ. Çула вăрмансенче пушар пулнипе, кĕркунне—хырăпа чăрăш йĕкелĕсем, майăрсем сахал пулнипе куçса кайаççĕ.

Куçса çӳренĕ чух вĕсем пушхирсем, шывсем, тусем, йалсем урлă хăш чух пысăк хуласем урлă та касса кайаççĕ. Çул çинче, шывсем урлă касса, йапăх условипе пакшасем пинĕ-пинĕпе вилсе пĕтеççĕ. Сăнаса пăхнă тăрăх пакшасем пĕр вырăнтан тепĕр вырăна 300 километра çити куçса кайаççĕ.

(„Горьковская коммуна“).

Електричествăпа ĕçлекен почтă

Ăслăлăхпа тĕпчев институчĕн работникĕсем електричествăпа ĕçлекен почтă шутласа кăларнă. Çырусене, телеграф бланкине тата ытти корреспонденцисене те металлран тунă цилиндр йевĕрлĕ патрон ăшне йараççĕ. Патронне трубопровод ăшне хураççĕ, çавăн тăрăх вара патрон хăй каймали çĕре питĕ пысăк хăвăртлăхпа кайать.

Хальхи вăхăтра ĕçлекен пневматикăлă почтăпа танлаштарсан електричествăлă почтăн усăлă йенĕсем питĕ пысăк. Вăл електричествă енергине 30 хут сахалтарах пĕтерет, икĕ хут хăвăртрах ĕçлет тата трубăсене тума тĕслĕ металл кирлĕ мар.

Çыхăну халăх комиссариачĕн заданийĕ тăрăх електричествăлă почтăна 1938 çул пуçламĕшĕнче Мускавра тата 1938 çул хушшинче ССР Союзĕнчи 26 хулара тăваççĕ. („Ленинградская правда“).

Чăвашсен йалхуçалăх ИНСТИТУЧĔ

Института вĕренме кĕме хатĕрлемели курссене уçас пирки решенийе ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Шкулсен Тĕп Управленийĕ улăштармала тунă, çавăнпа та курса вĕренме илмеççĕ.

ДИРЕКЦИ.

3—3

Тупăшсене валеçеççĕ

ЕЛЕК. (Хамăр корр.). Васкассинчи Илйич йачĕпе тăракан колхозра уйхир ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтернĕ хыççăн та çалхи тупăша валеçме тытăнчĕç. Тырă вăйлă пулнипе колхозниксен ĕçкунĕсем йăвăр тайаççĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне сурпар пăт тĕштырă тивет. Акă Г. Васильйев, П. Михайлов семйисем 400 пăт тырă илеççĕ. Тырă нумай илекен хăшпĕр колхозниксем çĕнĕ пӳртсем лартаççĕ. Ĕçкунĕсем пуçне тырă нумай тивни колхозниксене çав тери хавăслантарать. Вĕсем килес çул тата вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Ив. Маркелов.

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИ[illegible]Р.

РСФСР Çăмăл Промышленнăç Халăх Комиссариачĕ

„Роскожснабăн“ тир-сăранпа атăпушмак промышленнăçне чĕрĕ тавар тăратакан Чăваш республикинчи кантури

„Роскожснабăн“ облăçсем хушшинчи Горькири базин хăйĕн районсем хушшинчи хатĕрлев пунктисем урлă сăран-атă пушмак промышленнăçне вальли государствă, кооперативлă организацисенчен, колхозниксенчен тата йединоличниксенчен çаксене сутăн илет:

Чĕркемели чăпта, çĕленĕ чăпта—пур виçелисене те
Сӳçе, чăрăш тата йуман хуппи
Çака хупĕ
Пыл карасĕ
Курăс кантра-вĕренсем
Курăс
Хурăн хуппи—йапаласем тумали тата тикĕт кăлармали
Тикĕт.

Илессе—Чăваш АСС Республикинчи çак хатĕрлев пунктисенче илеççĕ:

Шупашкар хули, Герцен урамĕ, 34.
Канаш хули, Шăхран выçăлки, 63.
Улатăр хули, Горьки урамĕ, 13-б.
Вăрмар станци, Ленин урамĕ, 12.
Йетĕрне хули, Коммунальнайа, 78.

Курăс-чăпта тата ытти материалсемшĕн те йышăннă хыççăн укçине çийĕнчех тӳлеççĕ. Хакĕсем организацисем кăтартса панă тăрăх пулаççĕ.

„Роскожснабăн“ Облăçсем хушшинчи Горькири бази

2—1

ХИСЕПЛĔ ЙУЛТАШСЕМ!

„...Çĕр кăмрăкĕ чавмали мăлатук та, перекет кĕнеки те—савăнăçлă телейлĕ пурнăçшăн аслă кĕрешӳре чи кирлĕ оруди пулса тăрать“.

Алексей Стаханов—çĕр кăмрăкĕ чавакан мастăр-орденоносец.

ЕСĔР перекет кассисен пулăшăвĕсемпе усă куратăр-и вĕсен вкладчикĕсем пулса тăратăр-и?

Перекет кассисем пур граждансенчен те вкладсем йышăнаççĕ тата вкладчиксем пĕрре ыйтнипех пĕтĕмпех йе вкладăн пайĕсен суммисене параççĕ.

Вкладчиксен мĕн чухлĕ укçа выртнине, вкладчик камне тата ыт. перекет кассисем никама та пĕлтермеççĕ.

Вкладчиксем хăйсен укçисене хăйсен вăтăлăхĕнче тата урăх чух та хăйсен ашшĕ-амăшĕ, ывăл-хĕрĕсене, тăванĕсене памала туса хума пултараççĕ.

Перекет кассине укçа хывса унта усранăшăн вкладчиксене процент тӳлеççĕ.

Кирлĕ пулсан вкладчиксем пĕре ыйтнипех хăйсен укçисене урăх перекет кассисене куçараççĕ.

Аккредитивсем йышăнаççĕ тата вĕсем тăрăх укçа тӳлеççĕ.

Государствă займĕн облигацийĕсем тăрăх тухнă выльăвсене тӳлеççĕ, купонсемшĕн укçа тӳлеççĕ.

Граждансем пурте государствă займĕсен облигацийĕсене залога хывса ссудă илме пултараççĕ.

Пурте перекет кассисен услугисемпе усă курăр.

Перекет кассисем пур район центрĕсенче те, пур почтă уйрăмĕсенче те ĕçлеççĕ.

Шупашкар хулинче 3 перекет касси ĕçлет:

60/1 №-лĕ перекет касси почтă çумĕнче, канмали кунсемсĕр пуçне кашни кунах ирхине 10 сехетрен пуçласа 15 сехет те 30 минутчен ĕçлет.

Унăн адресĕ: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, Çыхăну çурчĕ, 1,2,3-мĕш №-лĕ чӳречесем. Телефон № 5-98.

60/3 №-лĕ перекет касси канмали кунсемсĕр пуçне кашни кун ирхине 9,5 сехетрен пуçласа 15 сехетчен ĕçлет.

Унăн адресĕ: Шупашкар хули, Ленин урамĕ, 7-мĕш №-лĕ çурт.

60-мĕш №-лĕ Тĕп перекет касси кашни кунах канмали кунсенче те, ирхине 9 сехетрен пуçласа 19 сехет те 30 минутчен ĕçлет.

Тĕп перекет кассин адресĕ: Шупашкар хули, Хĕрлĕ плошчĕ, Чăваш республикĕнчи Финанс Халăх Комиссариачĕн çурчĕ.

Чăваш республикĕнчи Государствă Перекет кассин тата Государствă Кивçенлĕхĕн Управленийĕ.

ССР СОЙУЗĔН ГОСУДАРСТВĂ СТРАХОВАНИЙĔ

КОЛХОЗСЕМ

акнă тĕштырăсене, пăрçалă тата технически культурăсене; сат-пахчисене, çырла пахчисене, лашасене ĕнесене, ытти вак выльăхсене, çурт-йĕрсене, хуçалăхри ĕçхатĕрĕсене тата ытти пурлăхсене

страхлама пултараççĕ

Колхозсен, колхозниксен, уйрăм хуçалăхлă хресченсен, рабочисен, служащисен тата ытти граждансен пурлăхĕсене

ирĕклĕ йĕркепе страхлама пулать.

Рабочисем, колхозниксем тата служащисем КИЛТИ ПУРЛĂХА СТРАХЛАМА ПУЛТАРАÇÇĔ.

тĕрлĕрен справкăсем тата ăнлантарусем илме районсенчи тата хуласенчи страховой инспекцисене, çавнашкалах Госстрах агенчĕсем патне тата Государствă страхованийĕн Чăваш республикинчи уйрăмне пымала.

Шупашкар хули, К. Маркс урамĕ, 12. Тел. № 2—76.

3—0

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита 1000. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13780. 58—82 [illegible]